24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1941
АПРЕЛЬ
10
КĔҪНЕРНИКУН
84 (5799) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ.

Вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешес ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхне бригадӑсемпе звеносем татса параҫҫӗ

Партипе правительство колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен йышӑннӑ постановленине колхозниксен масси производствӑллӑ ҫӗнӗ ҫӗкленӳ тунипе хапӑл туса йышӑнчӗ. Ку постановлени колхоз уйхирӗсенче, фермӑсенче пӗтӗм пӗлӗве, пултарулӑха парса ӗҫлекен ҫынсемшӗн сталинла тӑрӑшнине тепӗр хут кӑтартса парать.

Колхозсенче малта пыракансем, колхоз производствине ҫирӗплетес тӗлӗшпе пӗтӗм вӑй-хала хурса ӗҫлекен ҫынсем, ҫак историллӗ паха решенине пурнӑҫа кӗртме тытӑнчӗҫ. Вӗсем пур майсемпе те, хӑйсен аллинчи пур средствӑсемпе те туллин усӑ курса, пулас вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешессине кунран-кун вӑйлатса пыраҫҫӗ.

Вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешес ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхне колхозсенчи бригадӑсемпе звеносем татса параҫҫӗ. Тухӑҫлӑ тырпул илесси вӗсенчен, вӗсен ӗҫӗнчен килет.

Пирӗн республикӑра иртнӗ ҫулта чылай колхозсем, бригадӑсемпе звеносем, пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илсе, хӑйсен ятне чапа кӑларма пултарчӗҫ, кашни гектартан вӑтам шутпа ҫӗр пӑтран кая мар тӗштырӑ туса илессишӗн ӑмӑртса ӗҫлерӗҫ. 122 колхоз, 339 бригада тата 468 звено хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫларӗҫ. Ку колхозсем тата бригадӑсемпе звеносем гектартан ҫӗр пӑт е тата ытларах та илнӗ. Вӑрнар районӗнче ун пек бригадӑсем 50, звеносем—43; Калинински районра бригадӑсем—65, звеносем—190.

Вӑрнар районӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхозри иккӗмӗш бригадӑри виҫҫӗмӗш звено гектартан 190 пӑт тулӑ пухса кӗнӗ. Ҫакӑншӑн звенори мӗнпур колхозниксем тӑрӑшса ӗҫленӗ, вӗсем хӑйсен участокӗ ҫине минераллӑ удобренисем хывнӑ. Кӗркунне, ҫӗртме сухи тунӑ чухне, кашни гектар пуҫне 10 центнер фосфорит ҫӑнӑхӗ, 50 тонна торф тӑкнӑ. Ҫуркунне те вӗсем хӑйсен участокӗ ҫинчен манман: ҫӗре лайӑх ҫӳреленӗ тата тепӗр хут сухаланӑ. Вӑрлӑха яровизацилесе акнӑ. Ҫулла хӑйсен участокне тӗрлӗ ҫумкурӑксенчен тасатсах тӑнӑ.

«Колхозница» колхозри (Вӑрнар р.) А. Герасимова юлташ звени гектартан 55,8 центнер сӗлӗ, Д. Филиппова юлташ звени 58,4 центнер тулӑ туса илнӗ. Тӗлӗнмелле тухӑҫлӑх!

Ҫӗнтерӳ вӑл хӑй тӗллӗн килмест, ӑна ҫынсем ҫӗнсе, кӗрешсе илеҫҫӗ. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ малта пыракан колхозсем: Кольцовкӑри Сталин ячӗпе тӑракан, Булатовӑри Молотов ячӗпе тӑракан (Вӑрнар р.), «Динамо» (Куславкка р.), «Путь Ильича» (Улатӑр р.) колхозсен ячӗсемпе пӗрлех Ашанина, Герасимова, Додонова, Платонова юлташсен тата ытти звеноводсен хисеплӗ ячӗсем ҫинчен пӗтӗм республика пӗлет. Вӗсем вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешес ӗҫри ӑмӑрту ялавне ҫӳле ҫӗклесе пыраҫҫӗ, вӗсенчен нумайӑшне Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкин дипломӗсене тата медалӗсене парса наградӑланӑ. Вӗсем, социализмлӑ ҫӗрӗҫӗнчи стахановецсем, малта пыракан агротехникӑна алла ҫавӑрса илнӗ, хӑйсен кулленхи практикӑллӑ ӗҫӗсене наука вӗрентнӗ тӑрӑх туса пыма вӗреннӗ. Звеносенче ӗҫлени вӗсене ӗҫре кирлӗ пӗлӗве илме, хӑйсен вӑйлӑ тырпул туса илес ӑсталӑхне ӳстерме май пачӗ.

Звено—колхоз производствинчи ӗҫсене тӗрӗс организацилемелли форма. Вӑл — колхозра пултаруллӑ ӗҫлекен творчествӑллӑ коллектив. Кунта кашни колхозникӑн ӗҫӗ курӑнса тӑрать, кашни ӗҫ хӑй вӑхӑтӗнче хӑйне тивӗҫ мухтава илме пултарать. Кунта наянсемпе юлхавсем валли вырӑн ҫук. Звенопа ӗҫлени колхозри обезличкӑна, уравниловкӑна пӗтӗмпех пӗтерет.

Малта пыракан колхозсенче кашни бригадӑрах 3—4 звено пур. Звеносенче 9—10 ҫын ӗҫлет. Кольцовкӑри Сталин ячӗпе тӑракан орденлӑ колхозра кашни бригадӑра виҫшер звено. Вӗсене кашнинех хӑйсене уйрӑм участоксем уйӑрса панӑ. Кашни звено хӑйӗн участокӗнчи тырпулсене тирпейлесе акса, ӑна лайӑх пӑхса ҫитӗнтерет. Кунта кашни участокӑн хӑйӗн хуҫа пур. Тырпул тухӑҫне шута илессине те вӗсем звеносем тӑрӑх организациленӗ. Колхозниксем звенора пӗр-пӗрне лайӑх пӗлеҫҫӗ, кам мӗнле ӗҫленине кураҫҫӗ, пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Ӗҫлеме пултаракан пур колхозниксем те звенон производствӑллӑ ӗҫне активлӑн хутшӑнаҫҫӗ.

Лайӑх ӗҫлекен звеносем хӑйсен ӗҫне ҫавӑн пек йӗркеленӗ. Ӗҫе ҫирӗп йӗркепе организацилени кашни колхозникӑн ответлӑхне, дисциплинине ӳстерет, колхозри, бригадӑри тата звенори ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартать.

Анчах хӑшпӗр колхозсенче звеносен ӗҫне йӗркелессине халӗ те тивӗҫлипе хакламаҫҫӗ, звеносене ячӗшӗн ҫеҫ тӑваҫҫӗ. Ун пек колхозсенче звеношӑн тӑрӑшнине, вӗсен ӗҫне куллен тӗрӗслесе тата оперативлӑ пулӑшса пынине курма ҫук. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ хӑшпӗр районсенче вӑйлӑ тырпул туса илнӗ звеносем питех те сахал е пачах та ҫук. Гектартан ҫӗр пӑт туса илнӗ звеносем Кувакино районӗнче мӗнпурӗ те 6 кӑна, Октябрьски районра ун пек звеносем пӗрре те ҫук.

Звеносен ӗҫӗ ҫине ҫиелтен пӑхни уйрӑмӑнах Хӗрлӗ Чутай районӗнче палӑрать. Ку районри колхозсенче иртнӗ ҫулта пурӗ 600 звено тунӑ пулнӑ. Анчах звеносене бригадӑсенчен уйӑрса илме хӗн, звеносене 9—10 ҫынран йӗркелес вырӑнне, вӗсенче 15—20-шер ҫын шутланать.

Уйрӑм колхозсенче звеносем халӗ те туман-ха. Звеносем валли ятарласа участоксем уйӑрса паман. Ҫавӑнпа ӗнтӗ тислӗк, кӗл, торф турттарас тата минераллӑ удобренисем кӳрсе килес ӗҫсене звеносем тӑрӑх мар, мӗнле май килнӗ, ҫавӑн пек туса пыраҫҫӗ. Паллах, звеносене маларах тата ҫӑнласа йӗркелесен, вӗсене уйрӑм участоксем, ӗҫ хатӗрӗсем, колхоз производствинче кирлӗ ытти инвентарьсене вӑхӑтра уйӑрса парсан, вӗсем хӑйсен участокӗсенчен пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илессишӗн тата вӑйлӑрах кӗрешнӗ пулӗччӗҫ.

Кашни звено хӑйӗн участокне халех пӗлсе тӑтӑр. Хӑйӗн участокӗ ҫине вӑл ҫителӗклӗ удобрени хывма пултартӑр, акма таса та паха вӑрлӑх хатӗрлесе хутӑр, унӑн ӗҫ хатӗрӗсем пурте йӗркеллӗ пулччӑр. Звеносем мӗнле тухӑҫлӑхшӑн кӗрешмеллине, ӗҫ планӗсене тата ӗҫ нормисене тӗплӗн пӗлсе тӑччӑр. Ҫаксем вӗсем—кашни колхозӑн паянхи практикӑллӑ ӗҫӗсем. Мӗн кирлине пурне те халех палӑртса хумалла: звеносем партипе правительство кӑтартса панӑ йӗрке тӑрӑх, хӑйсен ырӑ ӗҫӗшӗн кӗркунне мӗн илме тивӗҫлине пӗтӗмпех илме пултарччӑр.

Звеносен ӗҫне йӗркелесе ҫитерес ҫӗрте ялсенчи коммунистсен ролӗ пит те пысӑк. Территориллӗ тата колхозри парторганизацисем ҫак пысӑк та ответлӑ ӗҫе ертсе пымалла, колхозниксен производствӑллӑ пуҫарӑвӗсене вӑйлӑн хавхалантармалла. Малта пыракан бригадӑсен, звеносен паха опычӗсемпе чи малтан хӑйсем тӗплӗн паллашса, вӑл опытсене ытти бригадӑсене, звеносене парас ӗҫе пушӑ сӑмахсемпе мар, производствӑра, ӗҫре туса иртермелле. Малта пыракан колхозсенче ӗҫе мӗнле организациленӗ, нарядсем хӑҫан тата мӗнле параҫҫӗ, ӗҫ нормисене мӗнле тунӑ, ӗҫе мӗнле шута илеҫҫӗ—ҫаксем ҫинчен кашни бригадӑна, звенона конкретлӑ кӑтартса парас пулать.

Звеносемпе бригадӑсен ӗҫне йӗркелессинче колхозсене тимлӗн пулӑшма пултаракан ҫынсем—вӗсем агрономсем. Бригадӑсемпе звеносенчи колхозниксене агротехника пӗлӗвӗпе хӗҫпӑшаллантарасси—пысӑк тухӑҫлӑ тырпул илес ӗҫӗн ҫирӗп никӗсне хывса хӑварасси—вӗсенчен килет. Ку тӗлӗшпе агроном Пирогов (Тӑвай р.) лайӑх тӗслӗхсем кӑтартса парать. «Красная Чувашия» колхозри бригадӑсенче кӗркуннеренпех агрокружоксем ӗҫлеҫҫӗ. Ун пирки ку колхозри бригадир П. Ваньков ҫапла ҫырать:

«Бригадӑсенчи колхозниксем агротехникӑна интересленсех вӗренеҫҫӗ. Кашни бригада ҫумнех пӗрер коммунист тата пӗрер учитель ҫирӗплетнӗ. Занятисем яланах йӗркеллӗ иртеҫҫӗ. Занятисем хыҫҫӑн хаҫат-журналсем вулатпӑр, политикӑллӑ ыйтусем тӑрӑх калаҫусем ирттеретпӗр. Колхозниксем агрокружокра вӗреннине мӗнле ӑнланни ҫинчен пӗр-пӗрне каласа параҫҫӗ. Халӗ хӗлкаҫа вӗренни тӑрӑх испытани пама хатӗрленетпӗр. Кашниех отлично тата хорошо паллӑсем илесшӗн тӑрӑшаҫҫӗ».

Парторганизацисен, колхозсен, ҫӗрӗҫ органӗсен хальхи васкавлӑ ӗҫӗ—вӑл бригадӑсене, звеносене ҫуракине тухма пур енчен те тӗплӗн хатӗрленсе ҫитме тивӗҫлӗн пулӑшасси. Ҫак паян-ыран тумалли ӗҫе тивӗҫлӗ организацисем мӗн чухлӗ аванрах тӑвӗҫ, вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешесси ҫавӑн чухлӗ ӑнӑҫлӑрах пулса пырӗ.

СССР Совнаркомӗ тата ВКП(б) Центральный Комитечӗ 1941 ҫулти мартӑн 13-мӗшӗнче колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен йышӑннӑ постановлени хӑйӗн ҫимӗҫне парӗ: пур культурӑсен тухӑҫӗ те ӳсӗ, колхозсен тупӑшӗсем пуянланӗҫ, Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставки участникӗсен хисепӗ татах нумайланӗ. Бригадӑсемпе звеносем лайӑх ӗҫлекен, вӗсен ӗҫӗсене лайӑх ертсе пыракан, агротехникӑна пурнӑҫа кӗртессишӗн ҫирӗпрех кӗрешекен колхозсем кӑҫал пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илӗҫ, пысӑкран та пысӑк ҫӗнтерӳсемшӗн кӗрешекенсен пуҫӗнче пулӗҫ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН

УКАЗӖ

Ф. В. Васильев юлташа Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Государство План Комиссийӗн Председателӗ пулса ӗҫлеме уйӑрса лартасси ҫинчен

Фрол Васильевич **Васильев** юлташа Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Государство План Комиссийӗн Председателӗ пулса ӗҫлеме уйӑрса лартас.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ.

З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ

Г. ГУСЕВ.

Шупашкар хули,
1941 ҫулти апрелӗн 9-мӗш.

ЧЕРЕВИЧНЫЙ САМОЛЕЧӖ ШМИДТ МЫСӖ ҪИНЧЕ

Ҫурҫӗр тинӗс ҫулӗн Главнӑй Управленийӗн инҫетри широта ҫинчи сывлӑш экспедицийӗ — апрелӗн 3-мӗшӗнче 3 сехет те 50 минутӑра (Мускав вӑхӑчӗпе) Ҫурҫӗрти Пӑрлӑ океанри пӑр ҫине анса ларнӑ экспедици — апрелӗн 7-мӗшӗнче 20 сехет те 45 минутӑра хӑйӗн пӑр ҫинчи лагерӗнчен тухса кайнӑ. «СССР Н-169» самолет юхса ҫӳрекен пӑр ҫинче 112 сехет те 50 минута хушши пулнӑ. Ҫак вӑхӑт хушшинче инҫетри широта ҫинчи экспедици анлӑ научнӑй программӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртнӗ. Карттӑ ҫинче пысӑк шурӑ пӑнчӑпа паллӑ тунӑ районра метеорологи, гидрологи, ҫӗр магнетизмӗ, астрономи, гравитаци тата актинометри енӗпе комплекслӑ научно-исследовательски ӗҫ туса ирттернӗ. Океан тарӑнӑшне, унӑн температурине виҫес тӗлӗшпе, пӑрсем ӑҫталла куҫса пынине, шыв ӑҫталла юхнине тата ыттисене сӑнаса вӗренес тӗлӗшпе туса ирттернӗ ӗҫсем наукӑпа практикӑшӑн питех те интереслӗ ӗҫсем пулса тӑраҫҫӗ. Ҫак пысӑк ӗҫе тунӑ ҫӗре «СССР Н-169» самолетӑн командирӗ И. И. Черевичный юлташпа пӗрле самолетӑн пӗтӗм экипажӗ тӳррӗмех хутшӑнса ӗҫленӗ.

Апрелӗн 7-мӗшӗнче 20 сехет те 20 минутӑра (Мускав вӑхӑчӗпе) «СССР Н-169» самолетӑн радисчӗ Макаров юлташ пӑр ҫинчи лагерьтен юлашки радиограммӑна эфира панӑ:

— Моторсене ӗҫе янӑ. Хамӑрӑн пурлӑхпа снаряженин юлашкийӗсене машина ҫине тиетпӗр. Ҫак минутӑра антенна мачтине пуҫтарса хуратӑп. Часах вӗҫсе ҫӗкленетпӗр. Манӑн радиостанцине татти-сыпписӗр сӑнаса тӑма ыйтатӑп.

Летчик Черевичный тытса пыракан сывлӑш карапӗ—«СССР Н-169» самолет 20 сехет те 45 минутӑра юхса ҫӳрекен пӑр ҫинчен вӗҫсе ҫӗкленнӗ, Шмидт мысӗ ҫинчи радиомаяк тӑрӑх ориентировка илсе, Врангель утравӗ ҫинелле ҫул тытнӑ. Диксон утравӗ, Челюскин мысӗ, Шмидт мысӗ, Врангель утравӗ, Тикси бухти ҫинчи радиостанцисемпе полярти ытти радиостанцисем эфирта «СССР Н-169» самолетӑн позывнойӗсене тимлӗн итленӗ. Пӑр ҫинчи лагерьтен вӗҫсе ҫӗкленнӗ хыҫҫӑн шӑпах пӗр сехет иртсен самолет ҫинчен штурман Аккуратов ҫапла пӗлтернӗ:

— 300 метр ҫӳлӗшӗнче вӗҫсе пыратпӑр. Хальхи вӑхӑтра широтан 80 градусӗпе 22 минути тата долготан 180 градусӗ тӗлӗнче вӗҫсе пыратпӑр. Пирӗн тӗлте аялта 10 баллӑ паковӑй пӑр. Пӑрсем купаланса ҫӗкленнӗ йӗрсене куратпӑр. Шывлӑ вырӑнсене ҫӗнӗ пӑр витсе тӑрать. Пӗлӗтлӗ. Пурте йӗркеллӗ.

23 сехет те 45 минутӑра «СССР Н-169» самолет ҫинчен ҫӗнӗ радиограмма илнӗ.

— Хальхи вӑхӑтра—уяр. Широтан 77 градусӗпе 20 минути тӗлӗнче пыратпӑр. Талккишпех сарӑлса выртакан пӑртан 300 метр ҫӳлӗшӗнче вӗҫсе пыратпӑр. Пӑрсем хушшинчи шывлӑ ансӑр вырӑнсене куратпӑр. Пурте йӗркеллӗ.

Татах тепӗр сехет иртнӗ. «СССР Н-169» самолет ҫинчен радио тӑрӑх ҫапла пӗлтернӗ:

— 320 метр ҫӳлӗшӗнче сехетре 175 километр хӑвӑртлӑхпа вӗҫсе пыратпӑр. Уҫӑ шывлӑ ансӑр вырӑнсем нумай. Пирӗн самолет валли анса ларма юрӑхлӑ пӑр татӑкӗсем пур. Ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ енчен 4 баллӑ вӑйпа ҫил вӗрет. Пурте йӗркеллӗ.

Апрелӗн 8-мӗшӗнче пӗр сехет те 45 минутӑра Черевичный самолечӗ широтан 74 градусӗпе 15 минути тӗлӗнче пулнӑ. Ҫак вӑхӑтра штурман Аккуратов ҫапла пӗлтернӗ:

— Пӑрсене вӑйлӑн хӗстернӗ йӗрсене куратпӑр.

2 сехет те 40 минутӑра Арктикӑн хӗвелтухӑҫ пайӗнче вырнаҫса тӑракан полярти станцисем эфирта «СССР Н-169» самолетӑн позывнойӗсене ҫӗнӗрен илтнӗ. Ҫак вӑхӑтра самолет Врангель утравӗ патне ҫывхарса пынӑ. Черевичный тата Аккуратов юлташсем ҫапла пӗлтернӗ:

— Пурте йӗркеллӗ. Шмидт мысӗ! Пулӑшнӑшӑн тавтӑватпӑр.

7 сехет хушши вӗҫнӗ хыҫҫӑн «СССР Н-169» самолет Эвенс мысӗ патне вӗҫсе ҫитнӗ тата апрелӗн 8-мӗшӗнче 4 сехет те 27 минутӑра Врангель утравӗ ҫинче Роджерс бухтине анса ларнӑ. Ҫавӑнта самолет ҫинчен научнӑй работниксем—Остретин тата Черниговский юлташсем аннӑ. Ҫавӑнтах научнӑй приборсемпе материалсене пушатнӑ. Врангель утравӗ ҫинче ятарласах туса йӗркеленӗ лабораторире инҫетри широта ҫинчи сывлӑш экспедицийӗн научнӑй работникӗсем сӑнаса пӑхма илнӗ шыва химиллӗ анализ туса пӑхаҫҫӗ, мӗнпур научнӑй материалсене малтанлӑха пӑхса тухса йӗркелеҫҫӗ.

Апрелӗн 8-мӗшӗнче 5 сехет те 25 минутӑра «СССР Н-169» самолет каллех сывлӑша вӗҫсе ҫӗкленнӗ, Шмидт мысӗ ҫинелле вӗҫсе кайнӑ. Темиҫе сехет иртнӗ хыҫҫӑн Ҫурҫӗр тинӗс ҫулӗн Главнӑй Управленийӗн начальникӗ Совет Союзӗн икӗ хут Геройӗ И. Д. Папанин юлташ Шмидт мысӗ ҫинчен Черевичный тата Либин юлташсенчен радиограмма илнӗ. Ҫав радиограммӑра ҫапла пӗлтернӗ: 6 сехет те 50 минутӑра, урӑхла каласан, Врангель утравӗ ҫинчен вӗҫсе ҫӗкленнӗ хыҫҫӑн пӗр сехет те 25 минутӑран «СССР Н-169» самолет Шмидт мысӗ ҫине чиперех анса ларнӑ.

Отчетпа суйлав пухӑвӗсене организованно ирттерер

Паян партин Шупашкар хула организацийӗнче пуҫламӑш парторганизацисен ертсе пыракан органӗсен отчетпа суйлав пухувӗсем пуҫланаҫҫӗ. Отчетпа суйлав пухӑвӗсем ВКП(б) XVIII съезчӗн тата партин Пӗтӗм Союзри XVIII конференцийӗн решенийӗсене пурнӑҫа кӗртесси мӗнле тӑнине тӗрӗслес паллӑпа иртеҫҫӗ.

Партин пуҫламӑш организацийӗсен ертсе пыракан органӗсен суйлавӗсем—вӑл парти организацисен пӗтӗм ӗҫне тӗрӗслени пулать. Коммунистсем государство планне тултарассишӗн, вырӑнти промышленноҫа аталантарса пырассишӗн, ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетессишӗн, социализмлӑ ӑмӑртупа стахановла движенине сарассишӗн, культурлӑхшӑн, типтерлӗхшӗн мӗнле кӗрешнине практикӑллӑ ӗҫӗн результачӗсене кура тӗрӗслемелле. Отчетпа суйлав пухӑвӗсем ҫине, коммунистсем ҫак отчетлӑ тапхӑрта парторганизаци тунӑ ӗҫсене тӗплӗн тӗрӗслемелли, малашнехи ӗҫсене палӑртмалли пысӑк ӗҫ вырӑнне хураҫҫӗ. Коммунистсем хӑйсен руководителӗсенчен иртнӗ суйлавра вӗсене парса хӑварнӑ сӗнӳсене пурнӑҫа мӗнле кӗртни ҫинчен ыйтма тивӗҫлӗ.

Тунӑ ӗҫсене хак парасси ҫине коммунистсем тимлӗн пӑхаҫҫӗ. Отчетпа суйлав пухӑвӗсенче критикӑпа самокритика вӑйлӑ пулмалла, вӑл пӗтӗм ҫитменлӗхсене тупса палӑртма пулӑшмалла.

Отчетпа суйлав пухӑвӗсене ирттерме хатӗрленнӗ май парти горкомӗ пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсен инструктивлӑ канашлуне туса ирттерчӗ. Пуҫламӑш парторганизацисене пулӑшма горком членӗсене тата аппаратра ӗҫлекенсене ҫирӗплетнӗ.

Пуҫламӑш парторганизацисем отчетпа суйлав пухӑвӗсене ирттерме тӗплӗн хатӗрленчӗҫ, хатӗрленеҫҫӗ те, отчетпа суйлав пухӑвӗсем хӑҫан, ӑҫта, хӑш вӑхӑтра пулассине коммунистсене малтанах пӗлтереҫҫӗ. Нумай пуҫламӑш парторганизацисем суйлав кунӗ тӗлне стена хаҫачӗсем кӑлараҫҫӗ.

Пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсен иртнӗ суйлавсен опытне шута илмелле. Иртнӗ суйлавсенче хӑшпӗр парторганизацисенче ВКП(б) Центральный Комитечӗн инструкцине пӑснисем пулнӑ. Сасӑлас ӗҫе кандидатсем хутшӑнни, кандидатсене тата горком представителӗсене шутлав комиссисене кӗртни пулнӑ.

ВКП(б) Центральный Комитечӗн инструкцийӗ партин ертсе пыракан органӗсен суйлавӗсене мӗнле ирттермеллине тӗплӗн кӑтартса парать. Инструкцине тӗрӗс пӑхӑнса ӗҫлени демократиллӗ централизм принципне кирлӗ пек пурнӑҫлама, БКП(б) Уставӗ панӑ правӑпа коммунистсене туллин усӑ курма май парать.

Пуҫламӑш парторганизацисен отчетпа суйлав пухӑвӗсем партипе правительство решенийӗсене пурнӑҫлассишӗн, предприятисен, артельсен, учрежденисен ӗҫне лайӑхлатассишӗн кӗрешме коммунистсене мобилизацилемелле.

Отчетпа суйлав пухӑвӗсене организованно ирттерни, ертсе пыракан оргӑнсене суйлама кандидатсене тӗплӗн шухӑшласа тӑратни пуҫламӑш парторганизацисене ертсе пыма Ленин—Сталин ӗҫне, коммунизм ӗҫне чӗререн парӑннӑ ҫынсене суйлама май парать.

М. АНДРЕЕВ.

ВКП(б) Шупашкар горкомӗн секретарӗ.

Отчетсем ҫыраҫҫӗ, парти хуҫалӑхне йӗркелеҫҫӗ

ВКП(б) Красноармейски райкомӗ ҫак кунсенче пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсен тата парторгсен районри канашлуне ирттерчӗ. Канашлу парторгӑнсен отчетпа суйлав пухӑвӗсене хатӗрленесси тата вӗсене йӗркеллӗ ирттересси ҫинчен сӳтсе-яврӗ.

Парти райкомӗ отчетпа суйлав пухӑвӗсене ирттермелли кунсене палӑртса ӗҫ планӗ тунӑ. Ҫав план тӑрӑх, отчетпа суйлав пухӑвӗсем апрелӗн 11-мӗшпе майӑн 1-мӗш хушшинче пулса иртмелле.

Районри чылай пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсем отчетсем ҫырма тытӑннӑ. Парти райкомӗнчи пуҫламӑш парторганизацин секретарӗ Еремеев, Тӗрерти территориллӗ пуҫламӑш парторганизацин секретарӗ Яшурина юлташсем отчетсене ҫырса пӗтернӗ.

Пуҫламӑш парторганизацисенче отчетпа суйлавсене хатӗрленнӗ май, парти хуҫалӑхне йӗркелеҫҫӗ, ҫамрӑк коммунистсем хушшинче ӗҫлессине вӑйлатаҫҫӗ.

Л. КОНСТАНТИНОВ.

Партбюро суйлавсене хатӗрленет

Чӑвашсен Ялхуҫалӑх институтӗнчи парторганизаци отчетпа суйлав пухуне ирттерме хатӗрленме тытӑннӑ. Халӗ партбюро ӗҫӗсем ҫинчен отчет ҫыраҫҫӗ. Отчет ҫырас ӗҫе партбюро членӗсем пурте хутшӑнаҫҫӗ. Пуҫламӑш парторганизацисен отчетпа суйлав пухуне хатӗрленнӗ май ятарласа стена хаҫачӗ кӑлараҫҫӗ.

СОВЕТ СОЮЗӖ ТӐРӐХ

РСФСР искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ, Государствӑн Мускаври П. И. Чайковский ячӗпе тӑракан консерваторри профессорӗ **Н. Я. Мясковский,** ӑна 21-мӗш симфонишӗн пӗрремӗш степеньлӗ Сталинла преми панӑ.

Япони Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ г. Иосуке Мацуока Мускавра

Апрелӗн 8-мӗшӗнче Япони Посолӗ г. И. Татекава Япони Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрне г. Иосуке Мацуокӑна чысласа кӑнтӑрлахи апат организациленӗ, унта ҫаксем пулнӑ: СССР Совнаркомӗн Председателӗ тата Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ, Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗсем А. Я. Вышинский тата С. А. Лозовский юлташсем, С. П. Козырев юлташ, В. П. Барков юлташ, С. К. Царапкин юлташ, ҫавӑн пекех тата Германи Посолӗ г. Шуленбург, Итали Посолӗ г. А. Россо, Венгри Посланникӗ г. Криштоффи, Словаки Посланникӗ г. Ф. Тисо, Болгари Посланникӗ г. И. Стаменов, Румыни Посланникӗ г. Г. Гафенку, г. Л. Маша, г. Г. Тилев, г. Михалкович, г. И. Попеску-Ласкани тата Япони Посольствин составӗ.

„Политическая и социально-экономическая литература“

(Критикӑпа библиографин икӗ эрнере пӗр хут тухакан журналӗ)

Литературӑллӑ критикӑпа библиографи — коммунистла воспитани памалли, малта пыракан теорине — Марксӑн, Энгельсӑн, Ленинӑн, Сталинӑн вӗрентӗвне пропагандӑламалли пысӑк средствӑсенчен пӗри. Пирӗн партин Центральный Комитечӗ йышӑннӑ постановленисенче литературӑллӑ критикӑпа библиографин ҫак задачисене пӗр хут ҫеҫ мар кӑтартса панӑ.

ВКП(б) Центральный Комитечӗ йышӑннӑ постановлени тӑрӑх ЦК ВКП(б) ҫумӗнчи Маркс—Энгельс—Ленин Институчӗ икӗ эрнере пӗр хут тухакан «Политическая и социально-экономическая литература» журнала кӑларма тытӑннӑ. Журналӑн тӗп задачи—марксистла-ленинла теорине вӗренес ӗҫре кирлӗ литературӑна суйласа илме пулӑшасси.

Журналӑн пичетленсе тухнӑ пӗрремӗш номерӗнче ҫакӑн пек статьясем пур: Г. Александров ҫырнӑ «Философин марксистла историйӗ», П. Вышинский ҫырнӑ «Философи историйӗн» пӗрремӗш томӗ, истори, экономика, тӗнчери хуҫалӑхпа тӗнчери политика ҫинчен ҫырнӑ статьясем пур, статьясен обзорӗ, библиографиллӗ консультаци панӑ т. ыт. те (ТАСС).

Петербургра рабочисем пирвайхи хут май уявӗ тунӑранпа 50 ҫул тултарать

50 ҫул каярах Петербургра, Нарва застави хыҫӗнчи вӑрманта, хальхи вӑхӑтра Жданов ячӗпе тӑракан завод корпусӗсем ҫӗкленсе ларакан вырӑнта, рабочисен пирвайхи май уявӗ пулса иртнӗ.

Тинӗс патӗнчех, пӗр уҫланкӑра Путиловски заводпа ытти предприятисенчи революциллӗ рабочисем пухӑннӑ. Пытанса ирттернӗ пуху вырӑнне пыма йывӑр пулнӑ: хӑшӗсем Екатерингофка юханшывӗ тӑрӑх кимӗпе, хӑшӗсем уйхир урлӑ пухӑннӑ вӗсем.

1892 ҫулта Женевӑра «1891 ҫулти майӑн 1-мӗшӗ» ятлӑ брошюра тухнӑ. Ҫав брошюрӑра рабочисем ҫав маевкӑра каланӑ сӑмахсем пичетленсе тухнӑ.

Ленинградри Кировски районӗнчи ӗҫҫыннисем ҫак датӑна паллӑ тума хатӗрленеҫҫӗ.

Противогазсем тӑхӑнса 105 пин поход тунӑ

Иртнӗ ҫулта Пӗтӗм Союзри химиллӗ ҫиччӗмӗш ӑмӑртусене Осоавиахимӑн пуҫламӑш организацийӗсем 38,5 пин организаци — 6 миллион та 300 пин ҫын хутшӑннӑ. Ҫак ҫулталӑк хушшинче предприятисенче противогазсем тӑхӑнса тренировкӑллӑ 181 пин заняти ирттернӗ, ҫав занятисене 10 миллион та 662 пин ҫын хутшӑннӑ. Ҫак вӑхӑт хушшинчех Осоавиахим организацийӗсем противогазсем тӑхӑнса 5 тата 3 километрлӑ походсем 105 пин поход ытла тунӑ. Походсене 9.197 пин ӗҫҫынни хутшӑннӑ.

Совет Союзӗнчи миллионшар ӗҫҫыннисем ПВХО нормисене панӑ.

Бессарабинчи ҫӗнӗ культурӑсем

Бендеры уездӗнче (Молдаван ССР) хӑйсем тӗллӗн ӳсекен тут йывӑҫҫисене 50 пин тӗп, кок-сагыз тӗмисене тупнӑ. Днестр патӗнчи вӑрмансенче хӑмла ӳсет. Нумай вырӑнсенче ҫулталӑкӗпех шыв тӑрать, ҫакӑ вӑл рис, ҫӗрмамӑк акса тума май парать. Кагул уезчӗпе ытти уездсенче колхозсем тата хресчен хуҫалӑхӗсем рис плантацийӗсем, Бендеры уездӗнче кок-сагыз плантацийӗсем тӑваҫҫӗ.

Академик Н. Д. Зелинский, органиккӑллӑ хими тӗлӗшӗнчи научнӑй проблемӑсем енӗпе тава тивӗҫлӗ пысӑк ӗҫсем тунӑшӑн, ҫурални 80 ҫул тултарнӑ май ӑна СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ 1941 ҫулти мартӑн 29-мӗшӗнче кӑларнӑ Указпа Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑланӑ.

Шахматистсен матч-турнирӗ

ЛЕНИНГРАД, апрелӗн 8-мӗш. (ТАСС). Паян халиччен выляса пӗтерейменпартисене выляса пӗтернӗ. Болеславский Кересрен выляса илнӗ. Ботвинник Бондаревскине выляса янӑ. Ботвинник—Смыслов, Бондаревский — Смыслов тата Лилиенталь — Бондаревский партийӗсем нихӑшӗ те ҫӗнтерейменнипе пӗтнӗ, противниксем ничья тунӑ.

Турнирта икӗ круг вылянӑ хыҫҫӑн малта халиччен пекех Ботвинник пырать, унӑн 6 очко тата выляман пӗр парти пур, Кересӑн — 5,5 очко, Смысловӑн — 4,5 очко. Болеславский 7 партирен 3,5 очко выляса илнӗ, Бондаревский 7 партирен — 3 очко тата Лилиенталь 9 партирен 3,5 очко выляса илнӗ.

Паян турнир участникӗсем Мускава тухса кайнӑ.

КОНСУЛЬТАЦИ

Промышленность тĕп фончĕн аслăланса пыракан социализмлă воспроизводстви

Этем обществи природăпа кĕрешме пăрахма, урăхла каласан, производствăна чарса лартма пултараймасть, мĕншĕн тесен çимелли, ĕçмелли, тумланмалли, хутмалли, çул çÿремелли т. ыт. япаласене туса тăмасăр пачах та пурăнма пултараймасть. Анчах та пурнăç пурăнма кирлĕ япаласене пушă алă вĕççĕн тума çук, вĕсене туса тăмашкăн çынсен тĕрлĕ йышши ĕç хатĕрĕсемпе хĕçпăшалланмалла.

Ĕçхатĕрĕсем, сырье, ĕç вăйĕ—кирек мĕнле обществăллă стройра та производствăн тĕп условийĕсем пулса тăраççĕ.

Капитализмлă обществăна илсен, унта ĕçхатĕрĕсем çынсен пĕчĕкçеççĕ ушкăнĕ аллинче—капиталистсен аллинче тăраççĕ; унта рабочисен ĕçхатĕрĕсем çук, çавăнпа та рабочисене тара кĕрĕшсе ĕçлесе пурăнма тивет. Капиталистсем фабрикăсемпе заводсене ĕççыннисене мĕн кирлине туса парас шутпа мар, услам ытларах илес шутпа тытса тăраççĕ, çавăнпа та унта ĕçхатĕрĕсем **капитал**, урăхла каласан, **прибавочнăй стоимость кÿрекен стоимость** пулса тăраççĕ.

Совет Союзĕнче çĕр, çĕр айĕнчи пуянлăхсем, шывсем, вăрмансем, заводсем, фабрикăсем, рудниксем, чугунçулсем, банксем т. ыт. пĕтĕм халăхăн, государствăн харпăрлăхĕ пулса тăраççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Сталинла Конституцире: Совет Союзĕн экономикăллă никĕсĕ хуçалăхăн социализмлă системипе производство орудийĕсен тата производство хатĕрĕсен социализмлă харпăрлăхĕ пулса тăрать, тесе каланă.

Совет Союзĕнче фабрикăсемпе заводсем, чугунçулсем, банксем т. ыт. те рабочисемпе ытти мĕнпур ĕççыннисен материаллă-культурăллă пурнăç шайне ÿстернĕсем ÿстерекен вăйсем пулса тăраççĕ. Хире-хирĕçле классене, çынна çын эксплоатацилес майсене тĕппипех пĕтерсе лартнă социализмлă çĕршывра промышленноçри пур тĕрлĕ машинăсемпе оборудованисем, производство çурт-йĕрĕсем т. ыт. капитал пулма, çын шучĕпе çынна пуйтаракан вăй пулма пултараймаççĕ: вĕсем пирĕн çĕршывра промышленноçăн тĕп фончĕ пулса тăраççĕ.

Совет Союзĕнчи промышленноçăн тĕп фончĕ вăл социализмлă, пĕрлешÿллĕ ĕçлевĕн ĕçхатĕрĕ (орудийĕ) пулса тăрать. Анчах та ĕçхатĕрĕ пулма пултаракан пур япаласем те тĕп фонд пулмаççĕ-ха, тĕп фонд пулмашкăн вĕсен ĕçе, производство процесне хутшăнас пулать.

Ĕçе кĕреймен машинăсемпе оборудованисем, производство çурт-йĕрĕсем т. ытти те, калăпăр, çĕнĕрен туса лартнă заводра пухса вырнаçтаракан машинăсем, анчах та халлĕхе ĕçе кĕрейменскерсем,—тĕп фонд пулмаççĕ, ĕçе кĕрсен тин вĕсем тĕп фонд пулса тăраççĕ. Тĕрлĕ складсенче ахалех ларакан машинăсемпе оборудованисем çинчен уйрăмăнах çакна калас пулать: вĕсем тĕп фонд пулмаççĕ кăна мар, вĕсене ахаль вырттарни—государствăна пысăк сиен кÿни пулать.

Анчах ĕçе тÿрремĕнех хутшăнман машинăсемпе оборудованисем пурте, пĕр сиктерсе хăвармасăрах, тĕп фонд пулмаççĕ-и? Пурин пирки те—пулмаççĕ, теме çук. Производство процесне татти-сыпписĕр пулса пыма пулăшакан запаслă машинăсемпе оборудованисем, паян кун ĕçре тăраканнисемпе пĕрле, паллах, тĕп фонд пулаççĕ. Урăх сăмахсемпе каласан, государство палăртнă план тăрăх туяннă, ĕçрен тухакан машинăсемпе оборудованисене улăштарма тесе ятарласах туяннă запаслă машинăсемпе оборудованисем тĕп фонд шутне кĕреççĕ; ыттисем вара тĕп фонд пулма пултараймаççĕ. Кун пек ытлашши машинăсемпе оборудованисене усăсăр тытса усракан хозяйственниксем, маларахах каларăмăр, государствăна тăкак кÿреççĕ.

Промышленноçăн тĕп фончĕ ĕçленĕ май, паллах, якалса пĕтсе пырать, стройран тухать. Производство кун пирки ан чарăнса лартăр тесессĕн, ку ĕçхатĕрĕсене якалса пĕтсе пынăçемĕн çĕнетсе, улăштарса пырас пулать. **Обществăллă производствăн татти-сыпписĕр çыхăнса тата çĕнĕрен те çĕнĕрен тăсăлса пыракан процесне ĕнтĕ воспроизводство процесĕ теççĕ.**

* * *

Промышленноçăн тĕп фончĕсем хăйсен сăнарĕ, характерĕ т. ыт. енчен тĕрлĕ пулаççĕ. Сăнарĕ енчен илсен акă мĕнле: 1) производствăллă çуртйĕрсем; 2) сооруженисем (сăмахран, шахтăсем, плотинасем т. ыт.); 3) силовой установкăсем; 4) передаточнăй установкăсем; 5) техникăллă оборудованисемпе машинăсем; 6) инструментсем; 7) инвентарь (чĕрри, чĕрĕ марри) тата 8) транспорт.

Промышленноçăн тĕрлĕ отраçлисенче кусен кашнин пайĕ питĕ те тĕрлĕ. Вăтамран шутласан промышленноçăн тĕп фондĕнче, сăмахран, производство хатĕрĕсене туса кăларакан производствăна илсен, производствăллă çуртйĕрсем—28 процент, сооруженисем—26,6, силовой установкăсем—9,7, ĕçлекен машинăсемпе оборудованисем—22,6, передаточнăй установкăсем—7,3, инструментсем—1,0, инвентарь—1,2 тата транспорт 5,6 процент шутланать.

Промышленноçăн тĕп фондне виçĕ тĕрлĕ майпа хаклаççĕ: 1) малтанлăха тăнă хакпа (первоначальная стоимость); 2) ĕçрен тухнă фонд вырăнне çĕнĕрен лартакан фонд хакĕпе (восстановительная стоимость); 3) якалса пĕтнин хакне кăларса пăрахсан юлакан хакпа (стоимость с учетом износа).

Малтанлăха тăнă хак вăл—ку фонда туса лартма чăннипе мĕн чухлĕ тухнă хак. Ĕçрен тухнă фонд вырăнне çĕнĕрен лартакан фонд хакĕ вăл—ĕçрен тухнă фонда тума хăй вăхăтĕнче чăннипех мĕн чухлĕ ларнă хак мар вăл—ку фонда çĕнĕ условире туса кăларма мĕн чухлĕ тухакан хак. Ку хак малтанлăха тăнă хакпа тан та мар пулма пултарать, мĕншĕн тесен ĕлĕкхи машинăсем вырăнне, вăйлăрах та тухăçлăрах машинăсем туса кăларма пултараççĕ е ĕлĕкхисенех тăваççĕ пулсан та вĕсене тунă çĕрте ĕç тухăçлăхĕ тĕпренех улшăнма, апла пулсан вара, туса кăларакан машинăсен хакĕ те тĕпренех улшăнма пултарать.

Промышленноçăн тĕп фончĕсене малтанлăха тăнă хакпа тата ĕçрен тухнă фонд вырăнне лартакан фонд хакĕпе хаклани пит те кирлĕ, мĕншĕн тесен ун пек хаклани амортизаци нормине тĕрĕс палăртса пама пулăшать. Анчах та промышленноçăн тĕп фончĕсене малтанлăха тăнă хакпа тата çĕнĕрен туса лартма тухакан хакпа хаклани час-часах çителĕксĕр, мĕншĕн тесен ун пек хакланисем промышленноçăн тĕп фончĕсем ĕçре мĕнтери якалса пĕтсе пынине кăтартса памаççĕ. Çавăнпа та тĕп фонд ĕçленĕ май мĕнтери якалса пĕтсе пынине пĕлес шутпа, промышленноçăн тĕп фончĕсене малтанлăха тăнă хакран якалса пĕтнин хакне накарса та хаклаççĕ, çапла вара тĕп фондăн паян куна юлнă чăн-чăн хакне тупса шута илеççĕ.

Машинăсемпе оборудованисем, производствăллă çурт-йĕрсем япаласем туса кăларнă чухне пĕтĕмĕшпех ĕçре пулаççĕ пулин те, хăйсен хакне пĕр хут туса кăларнă япаласен хакĕ çине пĕтĕмĕшпех, харăсах куçармаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем ĕçре пĕр хут пулнипех пĕтсе лармаççĕ. Çавăнпа та хăйсен хакне туса кăларакан япаласен хакĕ çине якалса пĕтсе пынăçемĕн çеç, пайăн-пайăн куçарса кĕртсе пыраççĕ.

Якалса пĕтсе пырассин виçийĕ нумай сăмантсенчен килет, пуринчен ытла—тĕп фондсен пахалăхĕнчен, нагрузкăран, рабочисен квалификацийĕнчен, тĕрĕс пуçтарнипе вырăна тĕрĕс лартнинчен, тулашри условисенчен лайăх хÿтленипе хÿтлеменнинчен т. ыт. те. Анчах çакна та калас пулать. Тĕп фонд юрăхсăра тухасси ялан ĕçре пулнинчен кăна килмест, ĕçсĕр тăнинчен те килет: ĕçсĕр тăракан машинăсемпе оборудованисем ĕçлекеннисенчен кая мар юрăхсăра тухаççĕ. Кун пек чухне вара государствăна икĕ енчен—пĕр енчен, ĕçлемени пирки, тепĕр енчен, ĕçлемесĕрех юрăхсăра тухнă пирки—тăкак пулать. Хозяйственниксен çакна нихăçан та манас пулмасть.

* * *

Амортизациллĕ отчисление ĕçре тăракан машинăсемпе оборудованисенчен, производствăллă çурт-йĕрсенчен кăна тума юрать. Тĕп фонд хакĕ шайĕнчен процентпа шутласа палăртнă çулталăк хушшинчи амортизациллĕ отчисление амортизаци норми теççĕ. Ăна ССР Союзĕн Совнаркомĕ палăртса парать. Амортизациллĕ отчисление — якалса пĕтсе çитнĕ тĕп фонда çĕнĕрен туса лартас шутпа тăваççĕ. Анчах та амортизациллĕ отчислени тĕп фонда ĕлĕк мĕн чухлĕ пулнă таран кăна çĕнетме май парать, çавăнпа та кун пек воспроизводствăна **простой воспроизводство** теççĕ.

Социализмлă обществăна простой воспроизводство кăна мар, тата аслăланса пыракан воспроизводство кирлĕ. Кунсăрăн çĕнĕ обществăллă строй çĕнтерме пултараймасть, кунсăрăн эпир социализмлă общество тума пултарайман пулнă пулăттăмăр.

Кашни предприятин амортизациллĕ отчисленийĕ, правительство палăртнă тăрăх, икĕ пая уйăрăлса тăрать: пĕр пайĕ предприятирех—директор аллинче целевой фонд пулса капитальнăй ремонт тума юлса пырать; тепĕр пайĕ вара промбанк урлă государство аллине куçать. Пур предприятисем те промбанка хывнă амортизациллĕ отчислени пурĕ пĕрле государство аллинче пит те пысăк суммăна çитет те пĕтĕм халăх хуçалăх планĕ тăрăх тĕп фонда çĕнетес çĕре каять.

* * *

Октябрьти социализмлă революциччен Российăри промышленноçăн тĕп фончĕ мĕн тери пысăк пулнă-ши?

1913 çулта патша Российĕнчи пĕтĕм фабрикăпа завод промышленноçĕн тĕп фончĕ, академик Струмилин шутласа кăларнă тăрăх, 4,2 миллиард тенке кăна çитнĕ. Ку суммăран çĕр хакне кăларса пăрахсан, промышленноçăн тĕп фончĕ пурĕ те 3,5 миллиард тенкĕлĕх кăна пулнă. Вăл шутра оборудованипе машинăсен хакĕ 1,8 миллиард тенкĕ пулнă. Анчах та ку машинăсемпе оборудованисен 1913 çулти чăн-чăн хакĕ унтан чылай кая пулнă, мĕншĕн тесен ку машинăсемпе оборудованисем 35 проц. таран якалса пĕтнĕ пулнă; çакна та шута илсен, вара машинăсемпе оборудованисем çине тивекен тĕп фонд чăннипе 1,2 миллиард тенке кăна çитнĕ.

Империализмлă пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче промышленноçăн хăшпĕр отраçлисенче, пуринчен ытла, вăрçă хатĕрĕсем туса кăларакан отраçлисенче, тĕп фонд чылаях ÿснĕ, анчах ÿснипе юнашарах тата фронт сарăлнă вырăнсенчи фабрикăсемпе заводсем юхăнса ишĕлсе пынă. Çавăнпа та империализмлă вăрçă вăхăтĕнче Российăри промышленноçăн тĕп фончĕ чылай ÿссе улшăннă теме нимĕнле сăлтав та çук. Пĕр сăмахпа каласан, патша Российĕнче промышленноçăн тĕп фончĕсем чаплах пулман.

Граждăн вăрçи вăхăтĕнче промышленноçăн тĕп фончĕсем ÿсме мар, татах та чакса пынă. 1918 çулти сентябрĕн 1-мĕш тĕлне Российăра промышленность предприятисем 9750 шутланнă пулсан, вĕсенчен пурĕ 6066 предприяти кăна ĕçлекелесе пынă, ыттисем ĕçлемен; ĕçлекен предприятисен тĕп фончĕ çулсерен улшăнса çĕнелсе пыман, йăлтах урăхла, ытларах та ытларах якалса пĕтсе пынă.

Граждăн вăрçи пĕтсен хуçалăха юсаса ура çине тăратнă тапхăрта промышленноçăн тĕп фончĕн воспроизводстви пуринчен ытла капитальнăй ремонт урлă пулса пынă. Пĕрремĕш пятилетка умĕнхи çулсенче промышленноçа хывнă капитальнăй вложени пурĕ те 5,2 миллиард тенке кăна çитнĕ. Ку шутран 700 миллион тенкĕ (13 проц.) кăна çĕнĕ строительствăна кайнă, ытти 4,5 миллиард тенки капитальнăй ремонтпа восстановительнăй ремонт тунă çĕре кайнă.

Уйрăм илнĕ пĕр çĕршывра, капитализмлă йĕритавралăхра пурăнакан çĕршывра та социализмлă обществăна тума пулать тесе Ленинпа Сталин вĕрентнипе хĕçпăшалланнă рабочи класс тата ĕçхресченĕсем Российăн юхăнса кайнă хуçалăхне кĕске вăхăт (4—5 çул) хушшинчех ура çине тăратрĕç.

Ку çулсенче промышленноçăн тĕп фончĕн воспроизводстви çапла пулса пынă **(миллион тенкĕпе)**:

Çулсем	Капитальнăй вложени.	Амортизациллĕ отчислени.	Капитальнăй вложени амортизациллĕ отчисленирен мĕн чухлĕ ытларах (+) е каярах (—)
1922/23	120	145	—25
1923/24	209	170	+39
1924/25	385	277	+108
1925/26	811	360	+451

Социализмлă çĕршыв кивĕ промышленноçпа çырлахма пултарайман. В. И. Ленин Коммунистла Интернационалăн IV конгресĕнче тунă докладра ку тĕлĕшпе акă мĕн каланă:

«Российăшăн çăлăнăç хресчен хуçалăхĕнче тырпул лайăх пулнинче кăна мар—ку сахал-ха,—хресченсене потреблени япалисене парса тăракан çăмăл промышленность лайăх ĕçленинче кăна та мар-ха—ку та сахал,—пире...**йывăр** индустри кирлĕ..

...Йывăр промышленноçсăр эпир нимĕнле промышленноçа та тума пултараймастпăр, кунсăрăн вара эпир хăйне уйрăм пурăнакан çĕршыв пулас тĕлĕшрен пĕтĕмпех пĕтсе ларăпăр» (т. XXIV, стр. 349).

Сталин юлташ, совет çĕршывĕшĕн мĕнле промышленность чи пирвай кирлине сăлтавласа парса, 1926 çулта акă мĕн каланă:

«Промышленноçăн кирек мĕнле аталанăвĕ те индустриализаци пулмасть-ха. Индустриализаци центрĕ, унăн никĕсĕ йывăр промышленноçа (топливо, металл т. ыт. те) аталантарнинче, производство хатĕрĕсене тăвакан производствăна... аталантарнинче, хамăрăн пайăр машиностроенине аталантарнинче пулать. Индустриализацин задачи пирĕн пĕтĕм халăх хуçалăхне унри промышленность пайне ÿстерессипатне илсе пырассинче кăна мар, унăн тата çак задача пур—çав аталанăвра пирĕн çĕршыва, капиталистсем хупăрласа тăраканскере, хуçалăх тĕлĕшĕнчен хăйне уйрăм пурăнакан тумалла, ăна тĕнчери капитализмăн хушмалчи пулса тăрассинчен сыхласа хăвармалла» (Ленин—Сталин, Сбор. произвед. к изучению истории ВКП(б), т. III, стр. 57).

Йывăр промышленноçа, производство хатĕрĕсене тăвакан производствăна, машиностроенине вăйлăн аталантарса пырас тесессĕн, промышленноçа çулсерен аслăланса пыракан воспроизводство тăрăх аталантармалла пулнă. Промышленность тĕп фончĕн аслăланса пыракан социализмлă воспроизводствийĕ вăл—çĕршыва социализмла индустриализацилени пулать те. Анчах та аслăланса пыракан социализмлă воспроизводство промышленноçа, амортизациллĕ отчисленисĕр пуçне, çĕнĕрен нумай укçа-тенкĕ хывса пырсан тин пулма пултарнă.

Ăçтан тупмалла пулнă-ха çавна тума кирлĕ укçана?

Капитализмлă çĕршывсене илсен, вĕсем кирлĕ укçана тĕрлĕ майсемпе тупнă. Акă, Англие илсен, вăл темиçе вуншар, çĕршер çул хушши ютçĕршывсене, колонисене çаратса тупнă капитал шучĕпе, ютçĕршывсенчен кивçен илнипе тата хăйĕн çĕршывĕнчи рабочисене эксплоатацилесе «туяннă» капитал шучĕпе индустриализациленнĕ.

Германие илес пулсан, Германия ĕнтĕ 1870—1871 çулсенче Францие вăрçăпа çĕмĕрсе тăкса унран 5 миллиард франк шăйăрса илнипе индустриализациленнĕ.

Патша Российне илсен, вăл ютçĕршывсенчен хăйне чуралантаракан условисем тăрăх кивçен илсе, ютçĕршывсенчи капиталистсене хăйне чуралантаракан условисем тăрăх концессисем парса индустриализаци çулĕ çине тухма тăрмашнă.

Индустриализацин çав майĕсем—совет çĕршывĕшĕн юрăхсăр майсем; ку майсемпе çĕршыва индустриализацилеме эпир, паллах, пултарайман.

Кирлĕ укçа-тенке хамăр çĕршыврах, хамăр хуçалăхрах тупмалла пулнă тата çак укçа-тенке эпир тупса пытăмăр та.

Октябрьти социализмлă аслă революци хыççăн помещиксемпе капиталистсене экспроприацилени, çĕрсем, фабрикăсем, заводсем, банксем, чугунçулсем т. ыт. те уйрăм çынсен харпăрлăхĕ пулнине пĕтерсе лартса, вĕсене пĕтĕм халăхăн харпăрлăхĕ туса хуни — сахал мар укçа-тенкĕ перекетлеме май пачĕ.

Патша парăмĕсене пăрахăçа кăларса, халăх ĕнси çинчен калама çук пысăк йывăрлăха сирсе пăрахни, паллах, социализмлă накоплени тăвас ĕçе çăмăллатмасăр тăма пултараймарĕ.

Государство аллинче тăракан, çулсеренех ăнăçлăн аталанса пыракан промышленноçран килекен тупăш та, ютçĕршывсемпе суту-илÿ тăвас ĕçри государство монополийĕнчен килекен тупăш та, государство организациленĕ хамăр çĕршыв ăшĕнчи суту-илÿрен килекен тупăш та, банк системинчен килекен тупăш та — çаксем пурте çĕршыва индустриализацилес çĕре кайса тăчĕç.

Кусемсĕр пуçне тата государство бюджетне чăннипех ĕççыннисен интересĕсемшĕн кирлĕ пек тыткалакан тата халăх хуçалăхне малалла аталантарма кирлĕ укçа-тенке май килнĕ таран перекетлесе пухакан государство влаçĕ пурри çĕршыва индустриализацилес ĕçе питех те çăмăллатса тăчĕ.

Кун пек майпа халиччен ниепле çĕршыв та индустриализациленмен. Ку май—çĕнĕ май, социализмлă май.

Çулсерен мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ хывса пынă-ха эпир промышленноçа? Акă çавна кăтартса паракан цифрăсем (миллион тенкĕпе):

1925/26	972	1934	11.868
1926/27	1.760	1935	13.024
1928	1.880	1936	15.969
1929	2.615	1937	15.300
1930	4.115	1938	17.460
1931	7.407	1939	17.590
1932	10.431	1940	27.800
1933	9.890	1941	39.200

Ку цифрăсене транспортпа çыхăну ĕçне хывнă укçа-тенкĕ кĕмест.

Промышленноçăн тĕп фончĕн аслăланса пыракан воспроизводстви капитальнăй вложени урлă пулса пырать. Анчах та промышленноçăн тĕп фондне хывакан капиталовложенипе аслăланса пыракан воспроизводство хисепĕ пĕртан мар, мĕншĕн тесен капиталовложенине амортизациллĕ отчислени те (простой воспроизводство та) кĕрет. Промышленноçăн тĕп фондне аслăлатса сарса яракан воспроизводство пысăккăшне пĕлмешкĕн промышленноçа хывакан пĕтĕм капиталовложенирен амортизациллĕ отчисленине кăларас пулать, çапла шутласа кăларсан тин эпир кашни çул чăн та **çĕнĕрен хывакан** укçа-тенкĕ хисепне тупатпăр.

Пĕрремĕш пятилетка пуçланнăранпа промышленноçăн тĕп фондне çулсерен хывакан капиталовложенире амортизациллĕ отчислени пайĕ 28,4 процентран пĕрре те иртмен, 10,7 процентран кая пулман. Чăн та **çĕнĕрен хывакан** капиталовложенин пайĕ вара промышленноçăн тĕп фондне çулсерен хывакан капиталовложенире 71,6 процентран кая пулман, чи нумайрах пулнă çулсенче 90 процент патнех çывхарса пынă. Промышленноçăн тĕп фондне çулсерен хывакан капиталовложенире чăн та çĕнĕрен хывакан укçа-тенкĕ пайĕ Совет Союзĕнчи пек çавтери пысăк вырăн йышăнса тăнине урăх ниепле çĕршыв та пĕлмест.

Промышленноçăн тĕп фончĕ 1913 çулта 3,5 миллиард тенкĕ пулнă пулсан, 1928 çулта — 49,4 миллиард тенке, 1932 çулта — 85,2 миллиард тенке, 1937 çулта 189,3 миллиард тенке çитнĕ.

Ку цифрăсем пирĕн социализмлă промышленноçăн тĕп фончĕ чăн та юмахри пек пит те хăвăрт ÿснине кăтартса параççĕ. Промышленноçăн тĕп фончĕ кун пек хăвăртлăхсемпе ÿсни урăх нихăш çĕршывра та пулман тата халĕ те çук.

Пĕр 1941 çулта кăна 2.213 çĕнĕ предприяти тумалла тата 742 предприятие тĕпрен çĕнетсе аслăлатмалла. Çапла вара, пĕр 1941 çулта кăна 2.955 предприяти тума тытăнмалла та вĕсенчен 1.756-шне кăçалах ĕçе кĕртмелле.

Çакăн пек пысăк хăвăртлăхсене пула пирĕн çĕршыв ялхуçалăхлĕ çĕршывран малти ретре пыракан индустриллĕ çĕршыв пулса тăчĕ. «...Производство техники енчен, промышленноçпа çĕрĕçне çĕнĕ техникăпа пуянлатни енчен илсе пăхсан, пирĕн çĕршыв ытти кирек хăш çĕршывпа танлаштарсан та чи малта тăрать...» (Сталин).

Шултра промышленность продукцийĕнче машиностроенин пайĕ халĕ тĕпренех улшăнчĕ. Машиностроенийĕн пайĕ 1913 çулта 6,8 процент пулнă пулсан, 1936 çулта 26,9 процента çитрĕ. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче машиностроенин пайĕ 1929 çулта 17,5 процент пулнă, Германире — 1928 çулта 12,2 процент, Англире — 1930 çулта 16,4 процент.

Халĕ пирĕн çĕршывра тума пултарайман машина çук.

Пĕр 12—13 çул хушшинче пирĕн социализмлă промышленноçăн продукцийĕ, 1913 çултипе танлаштарсан, тăхăр хут ытла ÿсрĕ, 1942 çул вĕçне—16 хут ытла пулмалла. Промышленность продукцийĕн пысăккăшĕпе эпир халĕ тĕнчере иккĕмĕш вырăн, Европăра пĕрремĕш вырăн йышăнса тăратпăр.

Промышленность тĕп фончĕн çулсерен аслăланса пыракан социализмлă воспроизводстви — обществăллă продукт, обществăллă доход, халăхăн материаллă пурнăçĕ, халăх пуянлăхĕ тата çĕршыв оборони малалла ÿссе пырассин чи паха условийĕ.

Пирĕн умра пит те пысăк задача тăрать, вăл — малта пыракан капитализмлă çĕршывсене экономика тĕлĕшпе те хуса çитсе иртсе каясси. Çак задачăна пурнăçа кĕртес тесессĕн, пирĕн малашне те промышленноçăн тĕп фондне ÿстерсех пырас пулать.

Çак задачăна пурнăçлама партин XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртсе пымалла. Техникăна алла лайăхрах çавăрса илесси, машинăсемпе оборудованисене туллин ĕçлеттересси, предприятисене таса тытасси, продукци пахалăхне ÿстересси, стахановла движенине вăйлатасси, — партин XVIII конференцийĕ йышăннă решенисенчен тухса тăракан çак ĕçсене — пĕтĕмпех те кашни куллен тата çине тăрса пурнăçа кĕртсе пырас пулать.

Д. И.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти райкомĕн пленумĕ

Çак апрель уйăхĕнче ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕн улттăмĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен» йышăннă постановленине пурнăça кĕртсе пырасси тата парти райкомĕ пĕрремĕш кварталта парти ретне илес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен сÿтсе-яврĕ.

Малтанхи ыйту тăрăх райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Железков юлташ доклад туса пачĕ. Докладчик районри колхозсем юлашки çулсенче организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕрекленни, тырпул тухăçлăхне, çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстерес енĕпе паха çитĕнÿсем туни çинчен чарăнса тăчĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта вăтам шутпа кашни гектартан 20 центнер ытларах, «Заря» колхоз — 15 центнер, «Красная Армия» колхоз — 16 центнера яхăн, «Социализм» колхоз — 15 центнер ытларах тĕштырă туса илнĕ. Уйрăм колхозсем обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те начар мар ĕçлеççĕ.

Партипе правительство ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановлени колхозниксемпе колхозницăсене ĕçшĕн тÿлес ĕçри тĕрĕсмарлăха, хуçасăрлăха пĕтерме тата колхозниксене ялхуçалăхĕнче татах та пысăк çитĕнÿсемшĕн кĕрешме хавхалантарать.

Районри чылай колхозсем, партипе правительство решенине ответлесе, çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатрĕç, вĕсем кăçал тĕштырă тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне пысăккăн ÿстерме пулаççĕ.

Парти райкомĕн пленумĕ çак решенине колхозниксем хушшинче çителĕксĕр ăнлантарса панине паллă турĕ. Кунпа пĕрлех постановленине колхозсенче пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыма кирли çинчен асăрхаттарчĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа парти райкомĕн секретарĕ Моряков юлташ доклад туса пачĕ. 1941 çулти пĕрремĕш кварталта Сĕнтĕрвăрри районĕнче парти членне 9 çынна, парти членĕн кандидатне 6 çынна илнĕ. Партине çĕнĕрен илнисем хушшинче малта пыракан çынсем пур. Акă, Ростиславцев, 1938 çултанпа машинно-тракторнăй станцинче бригадир пулса ĕçлет. Вăл кăçал хăйне çирĕплетсе панă тракторсене февраль уйăхĕнчех юсаса çитернĕ.

Калас пулать, юлашки вăхăтра районра партие илес ĕç чылаях лайăхланчĕ. Пуçламĕш парторганизацисем çак ĕç çине тĕплĕн пăхакан пулчĕç. Çакăнпа пĕрлех уйрăм пуçламĕш парторганизацисем çамрăк коммунистсем хушшинче начар ĕçлеççĕ-ха, вĕсене партпорученисем памаççĕ. Парти членĕн кандидачĕн Соловьева юлташăн (спиртзавод) нимĕнле поручени те çук, Грушин юлташ хăйне панă порученине пурнăça кĕртмесĕр тăрать. Çак парторганизацинче член укçине вăхăтра тÿлемен коммунистсем те пур.

Пренире тухса калакансем оргинструкторски тата пропагандăпа агитаци отделĕсем çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе йĕркелеме пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене çителĕксĕр пулăшнине паллă турĕç.

Пленум икĕ ыйту тăрăх та тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

М. СИДОРОВ.

Профсоюз работникĕсен вĕренĕвĕ

Шупашкарти профсоюзсен çуртĕнчи пуçламĕш парторганизацинче 19 коммунист тăраççĕ. Вĕсем пурте пекех профсоюзсен область комитечĕсенчи ертсе пыракан работниксем.

Профсоюзсен ĕçĕсене ăнăçлăн ертсе пыма кадрсем, уйрăмах ертсе пыракан работниксем, марксизм-ленинизм теорине вĕренсе алла илсе пыни кирлĕ. Çакна профсоюзсен çуртĕнчи пуçламĕш парторганизацинче тăракан коммунистсем тĕрĕс ăнланса илнĕ. Вĕсем, 17 çын, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренсе тухнă, — ку пуçламĕш парторганизацинче икĕ юлташ кăна çителĕксĕр вĕренеççĕ. Парти историне учебник тăрăх вĕренсе тухнă юлташсем кунпах чарăнса тăмаççĕ, вĕсем малалла та тĕплĕн, первоисточниксем тăрăх вĕренсе пыраççĕ.

Марксизм-ленинизм теорине ăнăçлăн вĕренсе пыракансене илсен, Александров юлташ, акă, В. И. Ленинăн произведенийĕсене чылайĕшне вĕреннĕ. Çавăн пекех Ильин юлташ та (финанспа банк работникĕсен профсоюз обкомĕн председателĕ) марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене тăрăшса вĕренет. Тата вăл, хăйĕн общеобразовательнăй пĕлÿне ÿстерме, çитĕннисен каçхи шкулне (VII класа) çÿрет, кунта та начар мар вĕренсе пырать. Ертсе пырас ĕçри хăшпĕр юлташсем вĕренме вăхăт çук тесе ÿпкелешни тĕрĕс марри тахçанах паллă,— Ильин юлташ примерĕ те вĕренесех тесе çине тăрсассăн вĕренме яланах вăхăт тупăннине кăтартса парать.

Кунта Водоватов юлташ та большевизм историйĕпе теорине тăрăшса вĕренет, çав вăхăтрах тата вăл пуçламĕш парторганизацинчи коммунистсемпе юлташла калаçусемпе консультацисем иртерет. Шарапов, Афонов, Афанасьев т. ыт. юлташсем те хăйсен пĕлÿне ÿстерес тĕлĕшпе пикенсе ĕçлеççĕ. Сакăр юлташ парткабинет циклсем тăрăх иртерекен лекцисене итлеме тăтăшах çÿреççĕ.

Анчах çак пуçламĕш парторганизацинче çитменлĕхсем те çук мар. Сăмахран, Федоров юлташ (пуçламĕшпе вăтам шкулсенчи учительсен профсоюзĕн обкомĕнче ĕçлет) хаçат вуланисĕр пуçне, урăх нимĕн те вуламасть. Вăл, çине тăрса вĕренес вырăнне, «вĕренме условипçук» тесе тĕлĕнтерет. Комсомолăн кунти пуçламĕш организацийĕ те комсомолецсене политикăна вĕрентес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеме тытăнман-ха (çичĕ комсомолецран виççĕшĕ кăна вĕренеççĕ).

1940 çулта профсоюзсен çуртĕнчи пуçламĕш парторганизацинче парти историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсемпе час-часах юлташла калаçусем туса иртеретчĕç. Анчах кăçал ку ĕçе туса пыма пăрахнă. Партбюро секретарьне Кормишин юлташа пирĕн çакăн пек сĕнÿ парас килет: марксизм-ленинизм теорине харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсене малашне те пулăшса пымалла; вĕсене валли консультацисем пани, вĕсемпе юлташла калаçусем тата пĕр-пĕрин опычĕпе паллашма канашлусем иртерни кирлĕ. Çавăн пекех стена хаçачĕн ĕçне чĕртсе, пропаганда ĕçĕнчи çитĕнÿсене çутатса, çитменлĕхсене критиклесе пырсан пысăк пулăшу пулĕччĕ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн бюровĕ профсоюзсен çуртĕнчи пуçламĕш парторганизаци ВКП(б) Обкомĕн V-мĕш пленумĕ пропагандăпа агитаци ĕçĕ çинчен йышăннă решенине пурнăça мĕнле кĕртсе пыни çинчен отчет итлесе, эпир маларах кăтартса панă çитменлĕхсене пĕтерме, пропагандăпа агитаци ĕçне лайăх йĕркелесе яма хушрĕ.

В. ИГНАТЬЕВ.

Тĕне хирĕçле ĕçе куллен туса пымалла

Тĕне хирĕçле ĕç Ишлей районĕнче халĕ те çителĕклĕ мар-ха. Юлашки вăхăтра тин ку ĕç кăштах вырăнтан хускални сисĕнет.

Çулталăк каялла районри виçĕ ялта кăна Вăрçăллă турăсăрсен союзĕн (СВБ) организацисем пулнă. Халĕ ĕнтĕ 43 ялта, вăтам тата туллимар вăтам шкулсенче пуринче те пекех СВБ организацисем пур. 1940 çулта ялсенче тĕне хирĕçле темăсем тăрăх лекцисемпе докладсем чылай тунă.

Пуçламĕш парторганизацисенчен хăшпĕрисем тĕне хирĕçле ĕçе хакламаççĕ. Кибеч-Кассинчи пуçламĕш парторганизаци тата унăн агитколлективĕ тĕне хирĕç пĕр калаçу та иртермен. Çав хушăрах Кибеч-Касси ялĕнче тĕн-тĕшмĕшлĕхрен уйрăлса çитменнисем сахал мар-ха. Унта поп пынă та 6 ачана шыва кĕртнĕ, вăл çавăншăн 300 тенкĕ укçа илсе кайнă. Парти ретĕнче тăракан Хлебников юлташăн арăмĕ те çавăн чухне кума пулма кайнă. Çăварни тĕлĕнче кăçал та ку ялта «хĕрсăри» туса муталанчĕç.

Мĕнрен килет-ха çакă? Вăл, чи малтан, ялти коммунистсем, комсомолецсем, ялти интеллигенци тĕне хирĕç çителĕксĕр ĕçленинчен, агитколлективсемпе стена хаçачĕсем тĕне хирĕç çителĕксĕр кĕрешнинчен, тĕн йăлисем хăйсемех пĕтессе шанса ларнинчен килет.

Калас пулать, хăшпĕр комсомолецсем тĕне хирĕç кĕрешмеççĕ кăна мар, тĕн праçникĕсене уявланă çĕре хăйсем те хутшăнаççĕ. «Хĕрсăри» тăвассине, сăмахран, хăшпĕр çĕрте комсомолецсем хăйсем пуçарнă. Катрасçилсоветне кĕрекен Явăш ялĕнче «хĕрсăри» валли çăнăх пухма шкулта вĕренекен ачасемпе усă курнă. Çак фактсем, паллах ĕнтĕ, çамрăксене тĕне хирĕçле воспитани парас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пурри çинчен калаççĕ. Çамрăксем хушшинче тĕне хирĕçле ĕçе вăйлатас пулать.

Попсен ултавĕ—мăнкун çывхарса килет. Чиркÿ праçникĕсем вăхăтĕнчи, уйрăмах пĕр эрне хушши пыракан мăнкун чухнехи, ĕçкĕ-çикĕ тата ĕненекенсенчен хăшпĕрисем ĕçе тухманни, çынсемпе çапăçса çÿрени пит пысăк сиен кÿрет. Мăнкуна уявлас йăлана пăрахăçа кăларассишĕн тăрăшса ĕçлемелле.

Ĕççыннисене коммунистла воспитани парасси, капитализмăн çынсен ăстăнĕнчи юлашкийĕсене пĕтересси пысăк задача пулса тăрать, тесе кăтартса пачĕ партин XVIII съезчĕ. Тĕне хирĕç кĕрешесси çак ĕçĕн пĕр енĕ пулса тăрать те ĕнтĕ. Апла пулсан, тĕне хирĕç вăхăтран вăхăта мар, куллен кĕрешсе пымалла.

И. ВИНОКУРОВ.

Совет литературин историйĕ

СССР Наукăсен Академийĕн Горький ячĕпе тăракан тĕнчери литература институчĕ «Совет литературин историне» пичетлесе кăларас тĕлĕшпе ĕçлет. Литература историйĕ икĕ томлă пулать. Пĕрремĕш томне хатĕрлесе çитереççĕ. Томра çакăн пек статьясем пулаççĕ: «Классикăллă наследи тата нумай нациллĕ совет литератури» ятлă ум-статья, «Совет литератури аталанăвĕн çулйĕрĕсем» ятлă очерк, М. Шолохов, А. Толстой, А. Серафимович тата Дм. Фурманов çинчен çырнă монографисем.

Иккĕмĕш томне кăçалхи çул пичете памалла. Иккĕмĕш томра тăванлă халăхсен литератури çинчен калакан раздел чылай пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Вырӑнти Советсем тата вӗсен кадрӗсем

Суйлавсем пулса иртнӗ хыҫҫӑн вырӑнти Советсем чи лайӑх работниксемпе ҫирӗпленчӗҫ, вӗсен авторитечӗ ӳсрӗ, халӑх избранникӗсемпе суйлавҫӑсем хушшинчи ҫыхӑну вӑйланчӗ. Ҫаксемпе пӗрлех вырӑнти Советсен ӗҫӗ ҫӗнелсе урӑхланчӗ.

Вырӑнти Советсен депутачӗсем — районра малта пыракан ҫынсем, вӗсем халӑх шанӑҫне тӳрре кӑларма тӑрӑшаҫҫӗ, партипе правительство лартнӑ задачӑсене ӗҫҫыннисем патне ҫитерессишӗн кӗрешеҫҫӗ, ҫав задачӑсене пурнӑҫа кӗртме колхозниксемпе колхозницӑсене мобилизацилеҫҫӗ. Вырӑнти Советсен депутачӗсем мӗнле ӗҫленине ҫакӑнтан та курма пулать. 1939 ҫулта ҫураки 18 кун хушши пынӑ пулсан, 1940 ҫулта 12 кун хушшинче вӗҫленнӗ. 1939 ҫулта тырпулсене уйран 32 кун хушшинче пуҫтарса кӗнӗ пулсан, 1940 ҫулта 12 кунта пуҫтарса кӗнӗ. 1939 ҫулта вӑтам шутпа район кашни гектартан 9 центнер тӗштырӑ туса илнӗ пулсан, 1940 ҫулта 13 центнера яхӑн туса илнӗ.

Промышленность тата суту-илӳ енӗпе те ӗҫсем чылаях лайӑхланчӗҫ. Иртнӗ ҫулта государство промышленноҫӗ тӑрӑх плана 76 процент, вырӑнти промышленность енӗпе—121 процент ытларах, потребсоюз енӗпе таварҫаврӑнӑш планне 109 процент ҫурӑ тултарнӑ.

Суйлавсем районра пултаруллӑ руководительсене вуншар ҫынна палӑртрӗҫ. Сӑмахран, Яндашево ялсовечӗ малтанхи вӑхӑтра кая юлса пыракансен шутӗнче тӑнӑ, суйлавсем иртнӗренпе вара пур ӗҫсем тӑрӑх та малта пырать. Ялсовет исполкомӗ яланах план тӑрӑх ӗҫлет, суйлавҫӑсемпе ҫирӗп ҫыхӑну тытать. Ялсовет иртнӗ ҫулти обязательствӑсене срокра тултарнӑ. Киров ячӗпе тӑракан колхоз пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илчӗ, районра малти рете тухрӗ. Ялсовет врач пунктне, вӑтам шкула яланах пулӑшать, ялсовет сумӗнчи комиссисем те лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Ялсовет исполкомӗн председателӗ Воробьев юлташ Шульгино ялсовечӗн ӗҫне тивӗҫлипе йӗркеленӗ. Исполком ларӑвӗнче сӳтсе-явакан ыйтусене малтан тӗплӗн хатӗрлеҫҫӗ. Ялсовет исполкомӗн председателӗ Воробьев юлташ вырӑнти активпа пӗрле ӗҫлет, вӑл актива ӗҫе сарлакан явӑҫтарать. Воробьев юлташ ялсовет территорине кӗрекен колхозсен ӗҫӗсене лайӑхлатма пулӑшать. Сӑмахран, Шульгинӑри колхоз малтанхи ҫулсенче ялхуҫалӑх ӗҫӗсемпе юлса пынӑ. Иртнӗ ҫулта колхоз ялхуҫалӑх ӗҫӗсене пысӑк пахалӑхпа вӗҫленӗ, пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илнӗ.

Шульгино ялсовечӗ 1941 ҫулти пӗрремӗш кварталти финанс планне 143 процент ытларах тултарнӑ. Райсовет исполкомӗ Воробьев юлташа укҫа парса премиленӗ.

Хула Совечӗн депутачӗ А. Малинкина юлташ суйлавҫӑсен шанӑҫне ӗҫре тӳрре кӑларма тӑрӑшать. Вӑл хула Совечӗн финанс пайӗн заведующийӗ пулса ӗҫлет. Иртнӗ ҫулшӑн укҫа-тенкӗ пухмалли плана 106 процент тултарнӑ. Малинкина юлташ финанс ӗҫне урамсенчи комитетсене явӑҫтарать, активпа лайӑх ҫыхӑнса ӗҫлет.

Хула Совечӗ ҫумӗнчи халӑха вӗрентес ӗҫӗн яланлӑх комиссийӗ (председателӗ Елистратова), сывлӑха сыхлав комисси (председателӗ Шумилин) план тӑрӑх ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак комиссисен актив йышӗ те пысӑк.

Вырӑнти Советсен вуншар та ҫӗршер депутачӗсем хӑйсен депутат обязанноҫӗсене кирлӗ пек туса пыраҫҫӗ. Кӗҫӗн Маклашкинӑри пуҫламӗш шкул заведующийӗ, район Совечӗн депутачӗ З. Базарова суйлавҫӑсем хушшинче пысӑк ӗҫсем туса ирттерет. Ҫавӑнпа ӑна суйлавҫӑсем юратаҫҫӗ тата хисеплеҫҫӗ.

Макаҫ ялсовечӗн депутачӗ М. Михайлов хӑйӗн округӗнчи суйлавҫӑсем хушшинче час-часах калаҫусем ирттерет. Вӑл суйлавҫӑсене Маленковпа Вознесенский юлташсен доклачӗсене тата XVIII партконференцин решенийӗсене ӑнлантарса панӑ. Халӗ партипе правительство колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен йышӑннӑ постановленине тӗплӗн ӑнлантарса парас тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлет.

Примерлӑ ӗҫлекен ялсоветсемпе пӗрлех начар ӗҫлекеннисем те пур. Водолеево (исполком председателӗ Егоров), Астакасси (исполком председателӗ Сергеев), Новински (исполком председателӗ Гаврилов) ялсовет исполкомӗсем партипе правительство йышӑннӑ постановленисене пурнӑҫа кӗртсе пырас тӗлӗшпе япӑх ӗҫлеҫҫӗ. Асӑннӑ ялсовет исполкомӗсем вырӑнти актива ӗҫе явӑҫтарма тӑрӑшмаҫҫӗ.

Райсовет исполкомӗн аппаратӗнче чӗрӗ ӗҫе пуҫарса пыма пултарайман ҫынсем пулнӑ. Райсобес пайӗн заведующийӗ Иванов хӑйӗн обязанноҫӗ ҫине ҫиелтен пӑхнӑ, колхозсенчи пулӑшу кассисен ӗҫӗсене ертсе пыман. Районри 55 колхозран 45 колхозра кӑна пулӑшу кассисем организациленӗ.

Район Совечӗн уйрӑм депутачӗсем депутат обязанноҫӗсене пурнӑҫа кӗртсе пымаҫҫӗ. Акӑ, Муравьева юлташ суйлавҫӑсемпе ҫыхӑну тытмасть, хӑй депутат пулнине ӗҫре кӑтартмасть. Уйрӑм депутатсем правительство йышӑннӑ постановленине пурнӑҫа кӗртсе пыма тӑрӑшмаҫҫӗ. Прогул тунӑшӑн Шигаево ялсовет исполкомӗн председательне Перлов, Кушниково ялсовет исполкомӗн председательне Толмачев юлташсене судпа ответ тыттарнӑ.

Юлашки вӑхӑтра ялсовет кадрсемпе ӗҫлесси улшӑнса, лайӑхланса пырать. Парти райкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, кашни уйӑхра ялсовет исполкомӗн работникӗсем валли семинар ирттереҫҫӗ. Ҫав семинарсенче политикӑллӑ ыйтусем тӑрӑх, совет аппарачӗн ӗҫӗсем ҫинчен докладсем туса параҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне тата ялсовет исполком председателӗсен пилӗккунлӑх семинарне ирттернӗ тата ялсовет исполком секретарӗсен семинарӗ те пулса иртнӗ.

Вырӑнти Советсен кадрӗсене практикӑллӑ пулӑшу парас шутпа канашлусем пулаҫҫӗ. Вӑл канашлусенче практикӑллӑ ыйтусемсӗр пуҫне теориллӗ ыйтусем лартса сӳтсе яваҫҫӗ.

Совет органӗсен уйрӑм работникӗсем практикӑллӑ ӗҫре ӳссе пыраҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта ҫавӑн пек работниксене 16 ҫынна парти ретне илнӗ.

XVIII партконференци промышленноҫа тата халӑх хуҫалӑхне аталантарса пырас тӗлӗшпе ҫӗршыв умне пысӑк задачӑсем кӑларса тӑратрӗ. Ҫак задачӑсене татса парас ӗҫре ӗҫҫынни депутачӗсен вырӑнти Совечӗсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрӗҫ. Вӗсен ӗҫҫыннисене ертсе пымалла, стахановла движенине пуҫарса пымалла. Вӗсен вырӑнти промышленноҫа тата промкооперацине пур енпе те вӑйлатмалла, ӗҫҫыннисем валли куллен кирлӗ таварсем ҫителӗклӗ пултӑр, тесе кӗрешмелле.

К. РОСТОВЦЕВ.

ВКП(б) Сӗнтӗрвӑрри райкомӗн секретарӗ.

Карп ӗрчетмелли питомник

Чӑваш республикинчи пулӑ трестӗн Сугутка шывӗ ҫинче карп йышши пулӑ ӗрчетмелли питомник пур. Ҫав питомникри пулӑсем лайӑх хӗл каҫрӗҫ. Питомникри шыва илсе сӑнаса пӑхнӑ хыҫҫӑн 1 литр шывра 6,5 кубла сантиметр кислород пулни палӑрнӑ. Пулӑсем норма тӑрӑх 1 литр шывра 5 кубла сантиметр кислород пулсан та аванах хӗл каҫма пултараҫҫӗ.

Халь питомникре ҫуркуннехи ӗҫсене тума хатӗрленеҫҫӗ. Питомникри пӑра касма, шыва юхтарса яма тытӑнаҫҫӗ.

Кӑҫал питомнике аслӑлатаҫҫӗ, ҫӗнӗрен тепӗр пӗве тума пӑхнӑ. Питомникри шыва сӑнамалли лаборатори пулать. Пӗвепе лабораторине тума 110 пин тенкӗ укҫа расходлама палӑртнӑ.

Ледниксемпе нӳхрепсем пирки

Кашни колхозрах выльӑх-чӗрлӗх фермисем пур. Фермӑсенче выльӑхсем йышланса пынӑ май аш-какай тата сӗт-ҫу продуктисен хисепӗ ӳсет. Вӑл продуктсене, уйрӑмӑнах ҫуллахи вӑхӑтра, пӗр пӑсмасӑр пӑхса усрас пулсан, колхозсенче ледниксемпе нӳхрепсем кирлӗ. Ледниксемпе нӳхрепсем тӑвасси ҫинчен Чӑваш АССР Совнаркомӗ кӑҫалхи февраль уйӑхӗнче ятарласа постановлени йышӑннӑ. Вӑл постановленире кӑтартнӑ тӑрӑх, кӑҫал августӑн 1-мӗш тӗлне 351 ледник тумалла, мартӑн 15-мӗшӗнчен кая юлмасӑр пур пек ледниксемпе нӳхрепсене пӑр тултарса хӑвармалла тата кашни колхозра 1—2 нӳхрепе юр тултармалла. Мӗнле пурнӑҫа кӗртеҫҫӗ-ха ҫав постановленине? Фактсем районсенче вӑл тӗлӗшпе ӗҫсем япӑх пыни ҫинчен калаҫҫӗ. Сӑмахран, Канаш районӗнчи хӑшпӗр колхозсене илер. Яманкассинчи Дорочин ячӗпе тӑракан колхозра кӑҫал 10 ӗне пӑруланӑ, халӗ 10 ӗне сӑваҫҫӗ. Халлӗхе унта сӗт-ҫусене ӑҫта кирлӗ унта усрама пулать, ҫанталӑк сивӗ тӑрать. Ҫанталӑк ӑшӑтсан ӑҫта усрама пултарӗҫ-ха вӗсем сӗт-ҫу продукчӗсене? Колхозӑн пӗр нӳхреп пулнӑ. Анчах вӑл нӳхрепе юсаса йӗркене кӗртме шутламаҫҫӗ. Сиккассинчи Шмидт ячӗпе тӑракан колхозра пӗр нӳхреп те ҫук. Сӗт-ҫу «ҫенӗкре усрамалла пулать», теҫҫӗ унта. Унта усрас пулсан шӑрӑх чухне сӗт-ҫу, паллах, пӑсӑлать.

Нӳхрепсем пур колхозсенче те вӗсене пӑр е юр тултарма тытӑнман. Шаккӑлти «Искра» колхозра:

— Пахча-ҫимӗҫсем пур-ха. Вӗсене кӑларсан пӑр тултаратпӑр, — теҫҫӗ колхоз правленинче ӗҫлекенсем. Анчах хӑйсем пахча-ҫимӗҫсене нӳхрепрен хӑҫан кӑларасси ҫинчен пӗлмеҫҫӗ. Ҫу пулсан, пӑрсем юхса кайсан кӑлараҫҫӗ-и тен? Ку паллӑ мар. Кун пек фактсене татах та илсе кӑтартма пулать.

Ледниксемпе нӳхрепсем кашни колхозах кирлӗ. Вӗсем кашни колхозрах пулмалла тата вӗсене тирпейлӗ пӑхса усрамалла.

Канаш. (Хамӑр корр.).

Яланах пӗр пек тикӗс ӗҫлесе пырассишӗн

Шупашкарти «Индпошив» мастерскойӗ 1941 ҫулти пӗрремӗш квартал планне 11 пин тенкӗлӗх тултарайман. Ҫак кунсенче мастерскойра производствӑллӑ канашлу пулса иртрӗ. Канашлура С. Курябина, А. Белякова, В. Колесников, Иванова юлташсем халиччен пулса пынӑ чылай чӑрмавсем ҫинчен каласа пачӗҫ. Вӗсем апрель уйӑхӗнчи плана Май уявӗ тӗлне 150 процентран кая мар тултарса, пӗрремӗш кварталта тултармасӑр юлнӑ плана пӗтӗмӗшпех тултарма сӑмах пачӗҫ. Малашне штурмсемсӗр, яланах пӗр пек тикӗс, пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлесе пыма пулчӗҫ.

В. Б.

Шкулсен строительстви

Кӑҫалхи ҫул ҫӗршыври хуласемпе ялсем ҫӗнӗрен тӑвакан ҫӗршер шкулсемпе пуянланаҫҫӗ. Автономлӑ республикӑсен уйрӑм районӗсенче, уйрӑмах яллӑ вырӑнсенче, нумай ҫуртсем тӑваҫҫӗ. Кӑҫалхи ҫул Ачинскри, Сучанри, Амур ҫинчи Комсомольскри, Якутскри, Баренцов тинӗсӗн ҫыранӗнчи Кильдински Ручей поселокӗнчи т. ытти ҫӗрти ачасем валли ҫӗнӗ шкулсем уҫӑлаҫҫӗ.

Нумай районсенче общественность строительствӑна анлӑ пулӑшу парать. Новосибирск облаҫӗнче шкул ачисен ашшӗ-амӑшӗсем хутшӑнса ӗҫленипе ҫӗнӗрен 149 шкул уҫнӑ. Колхозниксен пуҫарӑвӗпе Чӑваш республикинчи чылай районсенче шкулсем тӑваҫҫӗ. Тарнополь облаҫӗнче кӗркунне тӗлне 5.000 ҫын вӗренмеллӗх 22 шкул строя кӗмелле.

Колхоза мӗншӗн япӑхтарнӑ?

Ҫӗрпӳ районӗнчи «Броневик» колхоз 3—4 ҫул каялла районра чи малта пыракан колхозсенчен пӗри пулнӑ. Вӑл ун чухне агротехникӑллӑ ӗҫсене пурне те йӗркеллӗ, вӑхӑтра пурнӑҫласа пынипе ҫулсеренех вӑйлӑ тырпул туса илнӗ. Колхоз автомашина туяннӑ, двигательпе ӗҫлекен ҫӑнӑх авӑртакан тата ҫӑм тапакан армансем лартнӑ. 1937 ҫулта колхозниксен пӳрчӗсенче Ильич лампи ҫутӑлса ларнӑ. Шухӑшласан ӗнтӗ, унтанпа колхоз татах та ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тумалла пек, анчах шел, юлашки ҫулсенче кунта нимӗнле пысӑк ӗҫсем те тӑвайман. Хальхи вӑхӑтра колхозӑн автомашинипе ҫӑм тапакан арманӗ юсавсӑр пирки нимӗн усӑсӑр лараҫҫӗ. Электростанцийӗ те, динамо ҫуккипе, ӗҫлемест.

Колхоз иртнӗ ҫулта пур ӗҫсемпе те кая юлса пычӗ. Ҫуракине хатӗрленмесӗр тухнипе, ӑна кӗске срокра ирттерейменнипе, агротехникӑллӑ мероприятисене япӑх пурнӑҫласа пынипе ҫителӗклӗ тырпул туса илеймерӗ. Таврари колхозсем гектартан 12—14 центнер тӗштырӑ туса илнӗ пулсан, «Броневик» колхоз кашни гектартан 6,12 центнер ҫеҫ илнӗ. Ку ҫеҫ мар, колхозӑн чылай ҫӗр лаптӑкӗсем усӑсӑр выртнӑ. Акӑ, иртнӗ ҫуракиччен колхозран 8—10 колхозник ҫӗнӗ ҫӗре куҫса кайнӑ, вӗсен пахча вырӑнӗсемпе колхозӑн усӑ курмалла пулнӑ, анчах колхоз вӗсемпе усӑ курман.

Колхоз кӑҫал та ҫуракине начар хатӗрленет. Вӑрлӑхсене ку тарана ҫитсе те тӗплӗн сортласа ҫитермен, вӗсене райҫӗрӗҫ пайӗн лабораторине илсе кайса тӗрӗслеттермен. 80 гектар ҫине акма тулӑ вӑрлӑхӗ пачах ҫук, ҫавӑн пекех кантӑрвӑрри 7,5 центнер ҫитмест. Ҫӗрулми те вӗтӗрех касса лартсан ҫеҫ ҫитме пултарать.

Минераллӑ удобренисене мӗнпурӗ 24 тонна кӳрсе килмелле пулнӑ пулсан, пӗр тонна та кӳрсе килмен. Ҫавӑн пекех уя 1300 тонна торф кӑлармалла, 20 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухмалла пулсан, каллех нимӗн те туман.

Колхозра ҫакнашкал ҫитменлӗхсем пулса пыни вӑл, паллах, колхозӑн ҫирӗп руководство пулманнинчен, ялхуҫалӑх артелӗн Сталинла уставне ҫирӗппӗн пӑхӑнса ӗҫлеменнинчен, колхозниксем хушшинче ӗҫ дисциплинни япӑхланса кайнинчен килнӗ.

Колхозниксемпе колхозницӑсен март уйӑхӗнче пулса иртнӗ пухӑвӗ колхоз правленин составне салатса янӑ. Ун вырӑнне ҫӗнӗ правлени суйласа, ӑна ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтерме, ҫуракине тивӗҫлипе хатӗрленнипе кӗтсе илме, колхоза большевикла ертсе пыма хушса хӑварчӗ.

С. ПАВЛОВ.
Н. ИВАНОВ.

Тирпейсӗрсем

График тӑрӑх апрелӗн 5-мӗшпе ремонтран 7 трактор кӑлармалла.

— Запаслӑ пайсем ҫук, илме ярсан та илсе килмен, апрелӗн 15-мӗш тӗлне юсаса пӗтерсен аванччӗ, — тесе вӑрҫать хӑйне хӑй МТС директорӗ Шетинин.

Комсомол пуҫламӗш организацин секретарьне Никитин юлташа мартӑн юлашки кунӗнче ӗҫ панӑ. Ҫӗмӗрлерен плуг рамисемпе запаслӑ пайсем илсе килмелле пулнӑ. Апрелӗн 1-мӗшӗнче Никитин директор умӗнче питӗ салхуллӑн тӑрать. Хӑйӗн машинине Никитин Етӗрнерен 15 ҫухрӑма пӑрахса хӑварнӑ. Ҫапла, ответлӑ ӗҫсенче унӑн яланах мӗн те пулин пулать, е машина юр ҫине кӗрсе ларать, е бензин пӗтет, е урӑх мӗн те пулин пулать. Комсомол организацин секретарӗ юлхав, пример кӑтартма пултараймасть. Ҫавӑн пекех материаллӑ складсен заведующийӗ М. Еремин та хӑйӗн ӗҫне начар туса пырать. Складра запаслӑ пайсене илме трактористсене шанса уҫӑ парать. Ҫапла вара кирлӗ пайсене ҫухатса пӗтернӗ. Машинно-тракторнӑй станцинчи хӑшпӗр комсомолецсем ӗҫре аван тӗслӗхсем кӑтартас вырӑнне, начар примерсем кӑтартаҫҫӗ.

МТС-ри пӗчӗк мастерскойӗнче трактор пайӗсем сапаланса выртаҫҫӗ. Кунтах тасатаҫҫӗ, хӑшпӗр пайӗсене пӗрлештереҫҫӗ, юсаҫҫӗ. Пӗр сӑмахпа каласан, ҫаврӑнкалама та вырӑн ҫук. Пурте ӗҫлеҫҫӗ, утаҫҫӗ, кӑшкӑраҫҫӗ.

— Анчах пурччӗ, халь таҫта ҫӗтнӗ, — тет тракторист Силивестров. — Кунта муфта мар, трактор та ҫухалӗ, — тесе хучӗ юнашар тӑракан токарь. Ҫапла вара учет ӗҫӗ япӑхса кайнӑ пирки трактористсем пӗр-пӗрин тракторӗсенчен гайкӑсем тата тӗрлӗрен пайсем кӑларса илеҫҫӗ.

Иртнӗ ҫулта тракторсене ҫиелтен кӑна юсанипе ҫурри ытла колхозсене ҫитмесӗрех стройран тухнӑ. Кӑҫал та пӗр тракторӑн подшипник ҫӗмӗрӗлсе кайнӑ.

Ҫуракине тухиччен шутлӑ кунсем кӑна юлчӗҫ, апла пулин те МТС-ра 13 тракторист ҫитмест, Канашран ярса парасса кӗтсе лараҫҫӗ. Ҫавӑн пекех комбайнсем ҫинче ӗҫлекен кадрсем те ҫитмеҫҫӗ. 4 ҫынна комбайнер пулма вӗрентме ярас вырӑнне 2 ҫын кӑна янӑ.

Комсомолӑн МТС ҫумӗнчи пуҫламӗш организацийӗ тата унӑн секретарӗ Никитин дирекцине ӗҫре пулӑшмаҫҫӗ.

Я. СОРОКИН.

Етӗрне МТС.

Мелиораци ӗҫӗнчи пуҫаруллӑ ҫын

ИШЛЕЙ. 1935 ҫулта, Ишлей районне организациленӗ вӑхӑтра, колхозсенче мелиораци енӗпе ӗҫлеме Павел Иванович Ягушов юлташ килнӗ.

Мелиораци ӗҫӗ колхозсенче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Районра чылай колхозсенче шыв ҫитмен. Ҫавӑн пек вырӑнсенче, Ягушов юлташ пулӑшнипе, техника кӑтартнӑ пек пысӑк пӗвесем пӗвеленӗ.

Халӗ районра ун пек пӗвесем пурӗ 21. Шыв тытса тӑракан вырӑн лаптӑкӗшӗ 34 гектар шутланать. Кунсӑр пуҫне тата 25 гектар ҫӗр лаптӑкӗшне шӑварса тӑмалла тунӑ.

Колхозсене ҫителӗклӗ шыв парас тӗлӗшпе ӗҫлемеллисем татах та нумай-ха. Ку тӗлӗшпе Ягушов юлташӑн ӗмӗчӗсем пысӑк. Акӑ, Ишекри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз валли Унгӑ шывӗ ҫинче гидростанци тумалла. Вӑл ӗҫ ялхуҫалӑхне пысӑк усӑ памалла. Гидростанци тумалли вырӑнсене сӑнаса тухнӑ, техникӑллӑ проектсене туса хатӗрленӗ. Строительство валли 96 000 тенкӗ укҫа уйӑрса панӑ.

Мелиораци енӗпе районра мӗн-мӗн тумалли ӗҫсене вӑл пӗр ҫул малалла планласа пырать. Унӑн хӑйӗн участокӗнче юлса пыракан ӗҫ ҫук: пурне те хӑй вӑхӑтӗнче, йӗркеллӗ тума тӑрӑшать.

1940 ҫулта октябрь уйӑхӗнче Ягушов юлташа ҫӗрӗҫ пайӗн старший землеустроителӗ пулса ӗҫлеме лартнӑ. Кӑҫал январӗн 1-мӗшӗнче вӑл Мускаври ҫӗрйӗркелӳ институтне заочно вӗренме кӗчӗ. Вӑл хӑйӗн пӗлӗвне ӳстерме тӑрӑшать. «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» вӗренсе пырать.

Вӑл обществӑллӑ ӗҫе те активлӑ хутшӑнать. Стена хаҫачӗ кӑларнӑ ҫӗрте, местком ӗҫӗсенче ӑна яланах курма пулать.

1940 ҫулта Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Президиумӗ Ягушов юлташа хисеплӗ грамота парса наградӑларӗ. Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкин участникӗ пулса, вӑл пысӑк кӗмӗл медаль илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

В. АНИСИМОВ.

Райҫӗрӗҫ пайӗн мелиораторӗ.

Хаҫатра тухнӑ материалсем пирки

„Учебниксене вӑхӑтра пичетлесе кӑларассишӗн“

«Чӑваш Коммуни» хаҫатӑн «Учебниксене вӑхӑтра пичетлесе кӑларассишӗн» ятлӑ умстатьинче (№ 66, 20/III—1941ҫ.) чӑнах та учебниксене кӑларас ӗҫри тӗп ыйтусене тапратнӑ. Кӑҫалхи ҫул Чӑвашгизӑн пуҫламӗш, тулли мар вӑтам тата вӑтам шкулсем валли 62 учебник (ку шута иртнӗ 1940 ҫултан юлнӑ учебниксем те кӗреҫҫӗ), вӗренӳ пособисемпе программӑсем 12 кӑлармалла.

Массӑллӑ шкулсем валли кӑҫал кӑлармалли 62 учебникрен паянхи куна 7 учебник кӑна тухнӑ, вӗсенчен ултӑшӗ иртнӗ ҫултан юлнисем, производствӑра 20 учебник шутланать, анчах вӗсенчен хӑшӗ-пӗрисем типографи пуҫлӑхӗсен сӗтелӗсем ҫине ҫитсе выртнӑ та, наборщиксем патне ниепле те ҫитеймеҫҫӗ. Сӑмахран, Шапошниковпа Вальцев ҫырнӑ «Алгебра задачисен сборникӗ, 1-мӗш пайӗ» ятлӑ кӗнекене чӑвашла куҫарнине Наркомпрос 1940 ҫулти март уйӑхӗн 29-мӗшӗнче ҫирӗплетсе Чӑвашгиза панӑ, анчах ку кӗнекен алҫырӑвӗ паян кун та типографире пӗр тапранмасӑр выртать. Типографире тапранмасӑр выртакан алҫырӑвӗсем татах та пур. План тӑрӑх 1940 ҫулта тухмалла пулнӑ, алҫырӑвне вӑхӑтра хатӗрлесе ҫитернӗ 13 учебник тухмасӑр юлнӑ. Шупашкарти 1-мӗш номерлӗ типографи учебниксем кӑларас тӗлӗшпе кӑҫал та ҫавӑн пекех ӗҫлесен, паллах, плана тултарасси ҫинчен шухӑшласси те ҫук.

Учебниксем кӑларас ӗҫре паллӑ вырӑн, тӗп вырӑн йышӑнакан ӗҫ вӑл — учебниксене ҫырасси тата куҫарасси. Кӑҫалхи ҫул истори учебникӗсем ҫӗнӗрен 8 куҫармалла. Ку таринччен Наркомпрос пӗр учебнике (авалхи тӗнче историне) куҫарнине кӑна ҫирӗплетнӗ. Вӑтам ӗмӗрсен историне куҫарнине Наркомпросӑн тепӗр хут редакцилеме тавӑрса памалла пулчӗ. Истори учебникӗсене тата ытти хӑшпӗр учебниксене куҫарас тата редакцилес ӗҫ ку таринччен ҫителӗклӗ хӑвӑрт тата пахалӑхлӑ пулса пыраймасть-ха. Ҫавӑн пирки Наркомпрос витӗр те учебниксем часах тухаймаҫҫӗ. Ку вӑл куҫарас ӗҫ тата редакцилес ӗҫ пур чухне те кирлӗ пек ҫӳллӗ вырӑнта тӑрайманнинчен килет. Учебник алҫырӑвӗсен пахалӑхӗ ҫителӗклӗ пулман пирки, Наркомпросӑн вӗсенчен хӑшне-пӗрне тепӗр хут рецензие пама тивет. Капла туни ҫирӗплетес вӑхӑта тӑсса пырать.

Тухнӑ учебниксене рецензилес ӗҫ те ҫителӗклӗ вырӑнта тӑраймасть-ха. Учебниксене рецензилес ӗҫе вырӑнта ӗҫлекенсене хутшӑнтарас ӗҫе тинтерех анчах пуҫласа янӑ. Ку таринччен рецензилеме учительсене тата шкулсене пурӗ 10 учебник панӑ. Сергеев ҫырнӑ чӑваш чӗлхи грамматикине тепӗр хут кӑларма хатӗрленӗ чухне ҫак рецензире кӑтартнисене шута илнӗ.

Наркомпрос учебниксем кӑларас тӗлӗшпе хӑйӗн тумаллисене туса пырать: ҫитес вӗренӳ ҫулӗ валли мӗнле учебниксем кирлӗ пуласси ҫинчен Чӑвашгиза вӑхӑтра пӗлтернӗ, Наркомпрос ҫине тӑнипе кӑҫал кӑлармалли учебниксене хӑшне-пӗрне иртнӗ ҫултах чӑвашла куҫарнӑ (хими учебникӗ). Наркомпрос авторсем, рецензентсем, редакторсем тупас тӗлӗшпе те Чӑвашгиза пулӑшать. Кашни учебник алҫырӑвне хатӗрлесси мӗнле пынине, типографире ӑна пичетлес ӗҫ мӗнле пынине Наркомпрос тӑтӑшах тӗрӗслесе пырать. Анчах учебниксем вӑхӑтра пичетленсе тухас ӗҫ пуринчен ытла Наркомпроса пӑхӑнса тӑман учрежденисенчен: Чӑвашгизран, Полиграфипе издательство управленийӗн типографийӗсенчен килет.

Чӑваш литературипе вӑтам шкулсене валли ҫирӗп программа тӑвас тӗлӗшпе халӗ хӗрӳ ӗҫ пырать. VIII—X классен программин проектне тунӑ, V—VII классем валли тӑваҫҫӗ.

«Учебниксене вӑхӑтра пичетлесе кӑларассишӗн» ятлӑ умстатьяра палӑртнӑ ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе Наркомпросран килекен ӗҫсене пурне те ҫитес кӗске вӑхӑтра туса ирттерме, чӑваш чӗлхипе литературин программине май килнӗ таран хӑвӑрт хатӗрлесе, майӑн 15-мӗшӗнчен кая юлмасӑр пичете пама шутлатпӑр.

Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗн заместителӗ
М. ТИМОФЕЕВ.

Учебниксем тӗлӗшпе ӗҫлекен инспектор
М. НИКОЛАЕВА.

Хӗрлӗ Ҫар ретне кайма хатӗр тӑратпӑр

(Допризывниксен ҫырӑвӗ)

ҪӖРПӲ. Эпир, Первомайски ялсоветӗнчи допризывниксем, кӑҫалхи призыва кӗме тӗплӗн хатӗрленсе пыратпӑр. Призыва хатӗрленнӗ май ҫар ӗҫне вӗрентӗмӗр. Пирӗн ялсоветри допризывниксем чылайӗшӗ ГСО, ПВХО, ГТО тата «Ворошиловский стрелок» значокӗсене илчӗҫ.

Допризывниксем хутла аван пӗлеҫҫӗ, вӗсем пурте 7 ҫултан кая мар вӗреннӗ. Допризывниксем хушшинче учительсем, трактористсем, шоферсем пур.

Хӑшпӗр допризывниксем трахом чирӗпе чирленӗ пулнӑ. Халӗ вӗсем куҫ больницинчен сывалса тухрӗҫ. Эпир пурте Хӗрлӗ Ҫар ретне кайма хатӗр тӑратпӑр

Н. СМИРНОВ.
В. ЕВДОКИМОВ.

ВИҪӖ ЫВӐЛ

(Вырӑс халлапӗ)

Мучин виҫӗ ывӑл пулнӑ. Аслӑ ывӑлӗ моряк пулма кайнӑ, иккӗмӗш аэроплан ҫинче вӗҫме вӗренсе ҫитнӗ, виҫҫӗмӗш ывӑлӗ чикӗри хуралта тӑнӑ.

Аслӑ ывӑлӗ хӑйӗн Хӗрлӗ Ҫарта пурӑнмалли вӑхӑтне тултарса, киле герой пулса таврӑннӑ, хӑй илемлӗ тумланнӑ, лентӑсемпе. Ашшӗпе амӑшӗ хӗпӗртенӗ те каланӑ:

— Эсӗ килтӗн те-ха, шӑллусен служба вӑхӑчӗ тулман-ҫке-ха.

Самолет ҫинче ҫӳрекенни те часах таврӑннӑ. Вӑл самолетпа ял ҫывӑхнех анса ларнӑ, ун ӑшӗнчен вӑталӑх ывӑлӗ тухнӑ. Тумланасса ҫапах лайӑх тумланнӑ, пиджакӗ ҫӗн пиҫиххиллӗ, калпакӗ сӑрантан ҫӗленӗскер. Ырлӑх-сывлӑх суннӑ. Ваттисем савӑнса ӳкнӗ те ҫапла каланӑ:

— Кӗҫӗнни хӑть хӑвӑртрах таврӑнтӑрччӗ!

Виҫҫӗмӗш ывӑлӗ килмен те килмен. Пӗрмаях чикӗре хуралланӑ вӑл. Ӑна командирсем те пит юратнӑ. Службӑна вӑл лайӑх пӗлсе тӑнӑ, йӗркесене тӗп-тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пынӑ. Пӗррехинче, вӑл курах кайнӑ: тӑшман чикӗ урлӑ каҫма тытӑннӑ. Виҫҫӗмӗш ывӑлӗ тӑшмана чӗрӗллех тытнӑ та командир патне илсе пынӑ. Тӑшмансем, паллах, урса кайнӑ. Ун хыҫҫӑн сӑнама тытӑннӑ, тепӗрехрен, ҫӗрле ун ҫине тапӑннӑ та, ӑна тытса илсе кайнӑ. Кунта вара унтан мӗн чухлӗ сирӗн ҫар, ӑҫтарахра тӑраҫҫӗ тата вӗсем, тесе ыйтса пӗлме тапратнӑ. Виҫҫӗмӗш ывӑлӗ калама тытӑннӑ:

— Мана кун ҫинчен нимӗн те паллӑ мар. Эпӗ пӗр хамӑн стражӑна кӑна пӗлетӗп.

Тӑшмансем ӗненмен.

— Суятӑн! — тенӗ,—раз эсӗ салтак, ӑна йӑлтах пӗлмелле. Ахаллӗн эпир сана ямастпӑр, асаплантарса вӗлеретпӗр.

Виҫҫӗмӗш ывӑлӗ ҫапла каланӑ:

— Вӑл сирӗн ӗҫ. Пӗлес-тӑвас тӗлӗшӗнчен эпӗ нимӗн те пӗлместӗп. Пӗлес пулсассӑн та, каламан пулаттӑм.

— Ах, авӑ, эсӗ еплескер!—тесе калама тапратнӑ тӑшмансем. Ҫавӑнтах асаплантарма та тытӑннӑ, кинжалсемпе тӗрте-тӗрте илнӗ ӑна тата ытти усал-тӗсел ӗҫсене тума тапратнӑ.

Вӑл йӑлт юнланса пӗтнӗ, пуҫӗ те усӑнса аннӑ, вилме патне ҫитсе пынӑ, анчах нимӗскер те каламан. Тӑшмансем унтан нимӗн те ыйтса пӗлме ҫуккине курсан, ӑна чикӗ урлӑ каялла каҫарса ывӑтнӑ.

Пиччӗшӗсем шӑллӗне пӗрмаях кӗтнӗ, хӑйсем ҫапла тавҫарнӑ: «Мӗншӗн-ха хаклӑ шӑллӑм таврӑнмасть? Вӑхӑт ӗнтӗ!» Сасартӑк ҫыру килсе ҫитнӗ: «Сирӗн паттӑр ывӑлӑр тӑшман аллинче вилнӗ», тесе пӗлтернӗ ҫырура.

Ашшӗпе амӑшӗ ун пирки нумайччен макӑрнӑ. Аэроплан ҫинче вӗҫнӗ вӑталӑххи флотра пулнӑ пиччӗшне ҫапла каланӑ вара:

— Айда, Сталин юлташ патне кайӑпӑр та калӑпӑр: шӑллӑм пӗтнӗ вырӑнта пулас тетпӗр, тейӗпӗр.

Сталин юлташ патне килсе ҫитнӗ те каланӑ:

— Хӑть кирек мӗн пулсан та, хаклӑ Сталин юлташ, эпир урса кайнӑ тӑшмансене, хамӑр хаклӑ шӑллӑмӑршӑн, вӗрентсе илме шут тытрӑмӑр.

Сталин вӗсене—юрать, кайӑр,—тенӗ. Вӗсем вара шӑллӗ служить тунӑ ҫӗре кайнӑ. Чикӗне вӗҫсе ҫитсен вӗсене командир кӗтсе илнӗ, вӑл вӗсене ҫакна каланӑ:

— Эсир хӑвӑр шӑлну чӗрӗ чух ҫитме ӗлкӗреймерӗр. Эпир ӑна ҫӑлса хӑварас тесе тем чухлӗ тӑрӑшрӑмӑр, анчах ним те пулӑшмарӗ. Наука хӑпарса ҫитеймен-ха. Тин ҫеҫ вилчӗ сирӗн шӑлну.

Ун патне пиччӗшӗсем пынӑ, мӗн курнӑ-ха вӗсем: ӑна йӑлт амантса, касса пӗтернӗ. Пиччӗшӗсем шӑллӗшӗн макӑрма тытӑннӑ. Вӑталӑх пиччӗш, аэроплан ҫинче вӗҫме вӗреннӗскер:

— Пирӗн сӑртсем ҫине вӗҫсе ҫитсе килес пулать. Унта тӗрлӗ ҫӑлкуҫсем тапса тӑраҫҫӗ. Ҫавсем хушшинчех чӗрӗ шывлӑ уйрӑм шыв пур; ҫав шывран сурансем пӗтеҫҫӗ, ҫын сывалать, — тенӗ.

Флотра пулнӑ пиччӗшӗ:

— Хӑвӑртрах вӗҫер. Чӗрӗ ҫӑла тупӑр,—тенӗ. Аэроплан ҫине ларнӑ та, сӑртсем ҫине вӗҫсе кайнӑ вӗсем.

Вӗҫсе ҫитнӗ. Ҫӑлкуҫ шывӗсене шырама тапратнӑ. Акӑ, пӗчӗк ҫӑлкуҫӗ тупнӑ. Шыв унтан кӗрлесе тапса тӑнӑ, хӑй пӑр пекех сивӗ пулнӑ. Шыва илнӗ те вӗсем шутлама тытӑннӑ: ӑна пирӗн тӗрӗслесе пӑхас пулать. Халь кӑна ун ҫинчен шутланӑччӗ,—пӑх та кур, мулкач лара парать. Мулкача тӗлленӗ те, персе вӗлернӗ. Аслӑ пиччӗшӗ:

— Халь ӗнтӗ ҫак мулкача тӗрӗслесе пӑхӑпӑр: чӗрӗлӗ-и вӑл, ҫук-и,—тенӗ.

Ак мулкача шывпа сапма тытӑннӑ. Сурана, пуля лекнӗ тӗле, сапнӑ, тата тепӗр хут, виҫҫӗмӗшӗнче—мулкач йӑшӑлтатнӑ, сиккенсе те илнӗ. Ак епле сиксе тӑнӑ! Ак епле вӑшлаттарнӑ! Курса тӑр кӑна.

Пиччӗшӗпе шӑллӗ хӗпӗртесе ӳкнӗ. Пӗчӗк кӗленчене шыв тултарнӑ та, самолет ҫине ларса шӑллӗ патне килсе ҫитнӗ.

Вӑл пӗр хускалмасӑр выртнӑ: сывӑрман та, сывламан та. Вӗсем сурансене шывпа сапма пикеннӗ, хӑйсем, ун умӗнче тӑраканскерсем, макӑрнӑ.

Пӗр хут сапнӑ, тата тепӗр хут, курах кайнӑ: сурансем тӳрленсе пӗтсе пынӑ.

Виҫҫӗмӗш хут сапнӑ, шӑллӗ хускалма пуҫланӑ, пуҫне ҫӗкленӗ те, ерипен вӑл:

— Ох, эсир пиччесем манӑн, мӗнле эпӗ нумай ҫывӑрнӑ!

Вара пиччӗшӗсем ҫапла каланӑ:

— Эпир пулман пулсан, ӗмӗрех ҫывӑрнӑ пулаттӑн эсӗ.

Савӑнса кайнӑ командир киле кайма ирӗк панӑ вӗсене. Яра парӑр, канӑр, тенӗ вӑл. Тӑванӗсем патне вӗсем аэропланпа кайма шут тытнӑ. Тӑван ялне ҫитсен ял ҫумнех анса ларнӑ, ашшӗпе амӑшӗ патне кайнӑ. Халӑх, паллах, кӗҫӗнни вилнине пӗлнӗ,—халӗ пӑхнӑ та,—вӑл чӗрех. Анчах вӑл пит ырхан, шап-шурӑ пулнӑ, питӗнче пӗр юн пӗрчи те юлман. Ҫынсем, тӑвансенчен маларах, мучипе кинемей патне чупнӑ:

— Сирӗн ачӑрсем килеҫҫӗ. Кӗҫӗнни те чӗрӗ, анчах пит ырханланса кайнӑ, — тесе пӗлтернӗ ҫитсе.

Амӑшӗпе ашшӗ хӗпӗртесе ӳкнӗ, макӑрса янӑ. Тӑванӗсемшӗн ырханскер те савӑнӑҫ кӳрет.

Эрнене яхӑн пурӑнсан—вӗсем пӗрпӗрне ҫапла каланӑ:

— Ӗнтӗ халӗ Сталин патне ҫитсе килмелле. Виҫҫӗмӗр те кайӑпӑр, тӑванӑмӑрсем.

Ашшӗпе амӑшӗ:

— Эсир хӑть, хӗн-хур курса пӗтнӗ Егора хӑварӑр,—тенӗ.

— Ҫук,—тенӗ Егор,—эпӗ юлмастӑп. Манӑн Сталин патне ҫитмелле.

Ҫаплах тунӑ. Аэроплан ҫине ларнӑ та кайнӑ. Сталин патне ҫитсен хӑйсем ҫинчен пӗлтернӗ.

Сталин, паллах, вӗсене Кремле чӗннӗ, лармашкӑн сӗннӗ, шӑлнӗне мӗнле ҫӑлни ҫинчен каласа пама хушнӑ. Егора ҫӑлса хӑварнӑшӑн Сталин ҫавтери хӗпӗртенӗ, кашнинне аллисене чӑмӑрта-чӑмӑрта каланӑ:

— Мӗн кӑмӑллатӑр эсир манран?

Кӗҫӗнни, сывалса ҫитнӗскер:

— Виҫҫӗмӗр те пӗр-пӗринчен уйӑрлас мар тетпӗр, пӗрле пулма кӑмӑл тӑватпӑр. Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнче, чикӗре служить тума кӑмӑл тӑватпӑр,—тенӗ.

Сталин вӗсене:

— Ҫапла пултӑр эппин. Паттӑрсемшӗн урӑхла пулас та ҫук. Эпӗ ҫакӑн пек паттӑрсене ҫавтери кӑмӑллатӑп, ҫавтери юрататӑп, — тенӗ.

Вӗсене вӑл орденсем панӑ, тӑвансем вара чикӗне тухса кайнӑ.

Кӗҫӗнни чикӗне сыхлама тухнӑ, ӑна тӑшмансем курсан:

— Эй, Егор! Эсӗ-и вӑл?—тесе сухӑрнӑ.

— Самӑй ҫавӑ,—тенӗ вӑл.

— Эпир сана вӗлертӗмӗр-ҫке, — тӗлӗнсе кайнӑ вӗсем.

Егор ответленӗ:

— Эсир пире тепле вӗлерсен те, эпир каллех чӗрӗлетпӗр.

Тӑшмансем хӑраса ӳксе хӑйсен начальникӗсем патне чупнӑ, ӗшеленсе ӳксе мӗн курни-илтнине каласа кӑтартнӑ. Начальниксем епле хӑраса ӳкнине каласа пама та хал ҫитмест, пуҫӗсене тыта тӑнӑ:

— Ҫакӑн пек ӗҫ пит типтерсӗр япала. Мӗн курӑпӑр-ха эпир, мӗн тӑвӑпӑр-ха эпир вӗсене? Эпир вӗсене нихӑҫан та пӗтерес ҫук курӑнать...

(«Творчество народов СССР» кӗнекерен).

МИХ. ПАХЧАҪ куҫарнӑ.

Англипе Германи фронтĕнчи тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Англипе Германи хушшинчи фронтра çапăçакан енсен авиацийĕн активлăхĕ палăрать. Германи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, апрелĕн 7-мĕшĕнче Германи авиацийĕ Англине тата Англи суднисене хирĕç кĕрешнĕ. Ыран апрелĕн 8-мĕш тенĕ чух çĕрле Германин темиçе çĕр бомбардировщикĕ Англири нумай çар объекчĕсем çине вăйлăн бомбăсем пырса пăрахнă. Клайд юханшывĕ çинче Глазго çывăхĕнче Германи самолечĕсем портлă икĕ хула çине фугаслă бомбăсемпе вут чĕртсе яракан бомбăсем пырса пăрахнă. Çавăн пекех Бристольри, Ливерпульри, Ипсвичри тата Гарвичри портсем çине те бомбăсем пăрахнă. Германин пĕр самолечĕ центральнăй Англири авиаци завочĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Ыран апрелĕн 8-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕн тĕп вăйĕсем Киль çине пырса тапăннă. Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англи самолечĕсем çавăн пекех Бремерхавенпа Эмден çине бомбăсем пырса пăрахнă.

* * *

Сурçĕр Африкăра Италипе Германи войскисем малалла наступлени туса пыраççĕ. Итали сводкинче çапла каланă: Киренаикăра Италипе Германин бронетанковăй тата моторизованнăй чаçĕсем вăйлăн хирĕç тăракан англичансене парăнтарса, Баркăпа Токрăна туртса илнĕ (Бенгазирен çурçĕр-хĕвелтухăç енче). Наступлени малаллах пырать.

Англири хаçатсем çапла çыраççĕ: Киренаикăра Англи войскисем организованно тата малтанах палăртса хунă план тăрăх чакса пыраççĕ.

* * *

Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă коммюникере каланă тăрăх, Хĕвелтухăç Африкăра, Эритрейăра, операцисем Массауа районĕнче сарăлса пыраççĕ. Рейтер агентстви Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, унта çакăн çинчен сведени илнĕ: генерал де Голль ертсе пыракан француз войскисен малти патрулĕсем Массауа порчĕ патĕнчен 13 километрти пункта çитнĕ.

* * *

Абиссинире партизансем Дебра-Маркос хулине туртса илнĕ (Аддис-Абебăран çурçĕр-хĕвеланăç енче). Дебра-Маркоспа Аддис-Абеба хушшинче çул пур. Дебра-Маркос Абиссини столицинчен 180 километрта вырнаçса тăрать.

Апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС).

Америка корреспонденчĕсем Грецири вăрçă ĕçĕсем çинчен

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Лондонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Анкараран илнĕ сведенисем тăрăх, Греци войскисем Хĕвеланăç Фракирен тухса кайнă. Анчах та Грецин чиккĕри посчĕсем оккупациленĕ районра противнике хирĕç кĕрешме пăрахман-ха.

Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Нейшенел бродкастинг» радиокомпанийĕн Анкарари корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: нимĕçсем Эгейски тинĕсĕн çыранне пырса çитнĕ, Хĕвелтухăç Грецин Турципе чикĕленсе тăракан районне йышăнса илнĕ.

Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Афины хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Греци правительствин представителĕ çапла каланă: Македонире Греци войскисем контратака тунă, Германин нумай парашютисчĕсене тыткăна илнĕ. Правительство представителĕ каланă тăрăх, нимĕçсен тĕп вăйĕсем Беласицăна тата Струма юханшывĕн айлăмне хирĕç наступлени туса пыраççĕ пулмалла.

БАЛКАНРИ ВĂРÇĂ

БЕРЛИН, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). Германи хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕ çапла пĕлтерет:

Вырăн уйрăмлăхĕсене пула тата çулйĕрсене çĕмĕрсе хăварнине кура нумай йывăрлăхсем пур пулсан та, противник вăйлăн хирĕç тăрать пулсан та, Югославипе Греци фрончĕсенче Германи войскисен наступленийĕ ăнăçлăн пулса пырать. Германи авиацийĕ ĕнер, çанталăк начар пулнă пулсан та, Белградри укрепленисем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Главнăй вокзалти складсемпе сооруженисенче çĕнĕрен пысăк пушарсем тухнă. Германин пикировка тăвакан бомбардировщикĕсен соединенийĕсем тата истребительсен соединенийĕсем Югославири аэродромсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Çак операцисем вăхăтĕнче çĕр çинче ларакан 32 самолета пĕтерсе тăкнă. Тепĕр икĕ самолетне сиен кӳнĕ. Сава районĕнче самолетсем çинчен бомбăсем пырса пăрахса чугунçул кĕперĕсене, вокзалĕсене тата чугунçул линине çĕмĕрсе тăкнă. Çавăн пекех тавар турттаракан поездсем çине те бомбăсем пăрахнă. Скопле районĕнче Германи авиацийĕ противник пехотипе моторизованнăй колоннисем çине бомбăсем пырса пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Ĕнер кăнтăр-хĕвелтухăç фронтĕнче противникăн 20 самолетне персе антарнă. Противникăн пĕр самолечĕн ирĕксĕрех Хĕвелтухăç Штирире анса лармалла пулнă.

Германири информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: апрелĕн 7-мĕшĕнче ирхине противникăн пĕр бомбардировщикĕ кăнтăр-хĕвелтухăç фрончĕ енчен Германие вĕçсе пынă. Германипе Югослави чикки патĕнче Германи территорийĕ çине вĕçсе кĕме хăтланнă Бристоль «Бленхейм» йышши самолета Германи вăйĕсем ирĕксĕрлесех çĕре антарса лартнă.

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Англи çар карапĕсем англичансен войскисене Рагуза, Дубровник, Сплит тата Биоград порчĕсенче анса юлма пулăшнă. Çакна пула итальянецсен хăйсен флотне Царăран каялла чакса пыракан итальянецсене хӳтлеме илсе каймалла пулнă.

Болгарирен Ниш хули еннелле наступлени туса пыракан нимĕçсене малалла кайма чарса лартнă. Югослави войскисем контратакăсем туннипе нимĕçсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Югослави войскисем нумай çынна тыткăна илнĕ. Югославин верховнăй командованийĕ шутланă тăрăх, нимĕçсем Ниш еннелле пуçланă наступлени тимлĕхе урăх çĕрелле пăрса ярас шутпа тăвакан маневр пулса тăрать. Чăннипе илсен нимĕçсем, Греципе Югослави войскисене пĕрлешме чăрмантарас тесе, Крива юханшывĕ тăрăх Скопле çинелле наступлени пуçлама хатĕрленеççĕ.

АФИНЫ, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). Грецири телеграф агентстви çапла пĕлтерет: тусем хушшипе иртсе тухмалли Рупель ятлă вырăнти районра Англи истребителĕсен пысăк мар отрячĕпе Германи истребителĕсен пысăк соединенийĕ хушшинче сывлăшри çапăçу пулса иртнĕ. Çапăçура противникăн 5 самолетне персе антарнă тата темиçе самолетне пысăк сиен кӳнĕ. Англи авиацийĕ Бератри (Албания) çар объекчĕсем çине ăнăçлăн бомбăсем пырса пăрахнă.

РИМ, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). Итали командованийĕ çапла пĕлтерет: Албанире, Югослави фронтĕнче, малти отрядсен ĕçĕсем палăраççĕ. Грецири фронтра Итали войскисем пысăк мар атакăсене сирсе янă. Нумай çынна тыткăна илнĕ. Апрелĕн 6-мĕшĕнче Германи самолечĕсем Югослави территорийĕ çинчи авиаци базисем, боеприпассен склачĕсем çине тата пĕр çĕре пухăннă войскăсем çине ăнăçлăн пырса тапăннă. Çак операцисем вăхăтĕнче противникăн 3 самолетне персе антарнă тата 17 самолетне çĕр çинче пĕтерсе тăкнă.

ГРЕЦИ СВОДКИ

АФИНЫ, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). Ĕнер каçхине Греци командованийĕ çакăн пек сводка пичетлесе кăларнă: «Греципе Германи хушшинче вăрçă пуçланнăранпа иккĕмĕш кунне Струма юханшывĕн айлăмĕнче тата Неврокоп текен çӳлĕ мар сăрт тӳремĕнче Германи çарĕ халиччен пекех вăйлăн тата çине тăрса атакăсем тунă. Грецин вăйсăр войскисем паян та противнике паха позицисем çинче чарса тăма пултарнă. Струма юханшывĕн айлăмĕнче, нумай вăхăт хушши кĕрешнĕ хыççăн, «Истимбей» тата «Келкайя» форчĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Фортсем парăннă. «Рупел» тата «Уссита» форчĕсем çине артиллерирен персе тăнă хыççăн авиаципе танксем пырса атака тунă. Неврокоп патĕнче пĕтĕм вăй хурса çапăçнă хыççăн противник «Нерифори» фортне пырса кĕнĕ. Фортăн çĕр айĕнчи пайĕсенче пулса иртнĕ çапăçура унта пырса кĕнĕ противник отрячĕсене пĕтерсе тăкнă, форт территорийĕ грексен аллинчех юлнă. Противник танксем пулăшнипе «Лисс» форчĕ патне çывхарса пыма хăтланнă, анчах вĕсене те каялла хăваласа янă. Çак операцисем вăхăтĕнче Греци артиллерийĕ противникăн темиçе танкне пĕтерсе тăкнă. Çак районра пĕр офицер, Греци войскисен отрячĕн командирĕ, Неврокоп патĕнчен çурçĕр енчи кĕпере пĕтерсе тăкма приказ илнĕ хыççăн, противник танкĕсене кĕпер çине кĕртсе янă, çакăн хыççăн кирлĕ самантра вăл кĕпере взрыв туса çĕмĕрнĕ. Кĕперпе пĕрле противник танкĕсем те пĕтĕмĕшпех пĕтнĕ.

Оперативлă шухăшсемпе тата усăсăр çухатусем тăвас мар тесе, Греци войскисен малти вăйсăр отрячĕсем Хĕвеланăç Фракирен тухса кайнă. Грексен çавăнти «Эхинос» тата «Нимфайя» укрепленийĕсем противникăн йывăр вооружениллĕ чаçĕсен çулне пӳлсе тăнă.

Албанири фронтра Греци войскисем вăйлă наступлени туса противникăн укрепрениллĕ позицийĕсене туртса илнĕ, çакăнпа пĕрлех тата 500 çынна тыткăна илнĕ, нумай хĕçпăшал туртса илнĕ».

Англи авиацийĕ Софи çине бомбăсем пырса пăрахнă

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепех çапла пĕлтереççĕ: ыран апрелĕн 7-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Софи хулинче пĕр çĕре пухăнса тăнă нимĕç войскисем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Чугунçул станцийĕ, тавар станцийĕ, чугунçул узелĕ, складсем, автотранспорт тата пĕр пысăк предприяти çине питех те нумай бомбăсем пăрахнă. Нумай тĕлте взрывсем пулнă. Бомбăсем тивнипе пĕр пысăк пушар тата темиçе тĕлте пĕчĕкрех пушарсем тухнă. Англи самолечĕсем бомбăсем пăрахнă хыççăн, вĕсем тĕрлĕ объектсем çине тата Струма юханшывĕн айлăмĕнчи çулсем çинчи автотранспорт çине пулеметсенчен пырса пенĕ. Самолетсем пырса тапăннипе чылаях пысăк сиен кӳнĕ. Англин çак операцире пулнă пур самолечĕсем те чиперех хăйсен базисене таврăннă.

СОФИЯ, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). Болгарири телеграф агентстви Болгарин сывлăшран тапăннинчен сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен оборони кăларнă коммюникене парать. Коммюникере çапла каланă: ыран апрелĕн 7-мĕш тенĕ чух çĕрле ютçĕршыв самолечĕсем Софи çине пырса тапăннă. Хула çине фугаслă бомбăсемпе вут чĕртсе яракан бомбăсем 20 бомба пăрахнă. Темиçе çын вилнĕ тата аманнă. Темиçе çурта сиен кӳнĕ.

ÇУРХИ САВĂ

Янравлă тӳпе! Халь эпĕ курап:
Пуçланнă çур кунĕ... Тусем хуп-хура.

Шăнкăрч вĕçсе килнĕ, хатĕр ун йăва
Çырма хĕрринче палка çурнă хăва.

Пӳртсем çийĕнчен тумлать шавлăн тумла,
Шур юр ирĕлет, юхать авă çырма.

Вĕçсе килеççĕ ушкăнпа тăрнасем,—
Вĕри икерчĕн пăсланаç уйхирсем.

Вăхăт çас çитĕ—тухăпăр акана,
Эпир хатĕрленнĕ тахçан вăл куна.

Тумланĕ вăрман сип-симĕс тумпа,
Тыр акăпăр эпир хастарлăн хирте.

Хĕрӳллĕ ĕç пырĕ колхозлă уйра;
Кăвак тӳпере тăрри пуçлĕ юрра.

Пахалăхлăн иртĕ каллех çураки,
Тухăçлă тырпул телей çуратĕ.

Ялан çĕнтерӳллĕ артеллĕ вăй-хал,
Сакăр миллиард пăт тыр пулĕ кăçал!

...Шăрантăрах юрă, вăл саптăр хĕлхем,
Эпĕ çурхи куншăн курка халь çĕклем.

Питех нумай мар, пĕр сăмах çеç калам:
Сана, çуркунне, парам эп салам!

Чунтан юрататăп сана, çуркунне!
Шанатăп, эс кӳрĕн нумай ыррине!

Сергей Данилов.

Красноармеецсен çырăвĕсем

Май уявне хатĕрленме тытăнтăмăр

Эпир, №-лĕ чаçри красноармеецсем, Май уявне çар ĕçне тата политикăна отлично паллăсемпе вĕреннипе кĕтсе илме хатĕрленетпĕр. Красноармеецсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухса, хамăр çине татăклă обязательствăсем илтĕмĕр.

Пирĕн чаçре Чăваш республикинчен килнĕ красноармеецсем пур. Вĕсенчен нумайĕшĕ кĕçĕн командирсем пулса ĕçлеççĕ. Эпир, Чăваш республикинчен килнĕ красноармеецсем, çар ĕçне вĕренме пĕр-пĕрне пулăшса пырса вĕренӳре лайăх тĕслĕхсем кăтартатпăр.

Çар ĕçне вĕреннипе пĕрлех массăллă ĕçсене те активлăн хутшăнатпăр. Халь гимнастикăллă ăмăртусене ирттерме хатĕрленетпĕр. Çар ĕçне лайăх вĕренсе пыни тата гимнастикăллă ăмăртусенчи çитĕнӳсем пирĕн Май уявĕ умĕнхи парне пулать.

А. ПАВЛОВ.
П. ВАСИЛЬКОВ.

Хабаровск крайĕ.

Хамăр пултарулăха кăтартма хатĕрленетпĕр

Пирĕн чаçри красноармеецсем Май уявне ирттерме хатĕрленме тытăнчĕç. Уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăннă май çар ĕçне вĕренесси лайăхлансах пырать.

Эпир хамăрăн художествăллă пултарулăха кăтартма хатĕрленетпĕр. Шорников юлташ ертсе пынипе чăваш хорĕ организацилерĕмĕр. Хор юрăсем юрлама тата чăвашла ташласа пăма хатĕрленет. Ивановпа Петров юлташсем чăваш ташшисене лайăх ташлаççĕ. Громов красноармеец физкультура упражненийĕсем туса кăтартма хатĕрленет. «Авлану» пьесăна чăвашла выляса паратпăр.

Красноармеец **И. ГРИГОРЬЕВ.**

Архангельск облаçĕ.

Ирхи пахча-çимĕçсем сутма хатĕрленеççĕ

Канашри «Авангард» артель кашни çулах ирхи пахча-çимĕçсем лартса тăвать. Кăçал 500 рамăллă парникре тата виçĕ теплицăра ирхи пахча-çимĕçсем лартнă. Унта хăяр, купăста тата помидор ӳстереççĕ.

Хăярсем пулса çитрĕç. Купăстапа помидорсем те чăмăртаннă. Артель çак çимĕçсене Май уявĕ умĕн хулари ĕççыннисене сутма хатĕрленет.

С. ГРИГОРЬЕВ.

«Нарспи» драма — Чăвашсен Государство Академи театрĕнче. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Михетерпе арăмĕ Сетнер килĕнче (4-мĕш актри 1-мĕш картина).
А. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Осоавиахимăн тактикăллă вĕренĕвĕсен итогĕсем

Мускав облаçĕнчи осоавиахимовецсен хĕллехи тактикăллă вĕренĕвĕсен малтанхи итогĕсене тунă. Осоавиахимăн Мускав область Совечĕн председателĕ Вишневецкий юлташ ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла пĕлтернĕ:

— «Противникăн» парашютлă десантне хирĕç кĕрешесси—тактикăллă вĕренӳсен тĕп теми пулнă. Облаçри ялсемпе хуласенчи халăх вĕренӳсене активлă хутшăннă, Осоавиахим организацийĕсене пур майсемпе те пулăшнă.

Облаçри 37 районра, тактикăллă вĕренӳсем пулса иртнĕ районсенче, çутăсене сӳнтерсе маскировка тумалли тата «противник» авиацийĕнчен харпăрхайне сыхламалли мерăсем çинчен 2.597 пин ĕççынние ăнлантарса панă.

Облаçри 3.124 колхоз уйхирĕсенче парашютлă десантсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе тактикăллă ĕçсем сарăлса кайнă. Çак ĕçе боец-осоавиахимовецсем 160 пин çын ытла хутшăннă, вĕсене хĕçпăшалланнă 8.000 отряд, командăсем тата группăсем пĕрлештерсе тăнă.

Уйхирти йывăр обстановкăра, вăйлă çил, сивĕ, çилтăман условийĕсенче, хĕçпăшаллă отрядсем хăйсен тактикăллă задачисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынă. «Боевой» ĕçсем пур çĕрте те парашютлă десантсене пĕтернипе вĕçленнĕ. Осоавиахимовецсем колхоз пурлăхне, государствăн паха объекчĕсемпе сооруженийĕсене «противникăн» диверсиллĕ ĕçĕсенчен пысăк тимлĕхпе сыхланă.

Ялсемпе хуласене хӳтлес ĕçе тӳррĕмех ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен председателĕсем ертсе пынă. Партипе комсомол организацийĕсен работникĕсем пысăк пулăшу панă. Çутçанталăкăн йывăр условийĕсенче (сивĕ, çилтăман, тĕтре) Осоавиахим авиацийĕ ĕçленĕ, вĕренӳсенче вăл «противник» вырăнĕнче пулнă. Пилотсем 96 хут вĕçсе тухнă, сывлăшра 100 сехет ытла ирттернĕ. Нумай çĕрте сикнĕ парашютистсем хăйсен ĕçне лайăх вĕренсе хатĕрленнине кăтартса панă.

Боевой техникăна юратса вĕренекен колхоз çамрăкĕсем хăйсен пысăк ăсталăхне, чее япаласем гласа тупма пĕлнине кăтартса панă. Вĕренӳ валли орудисен, пулеметсен, винтовкăсен тата гранатăсен пиншер макечĕсене туса хатĕрленĕ. «Боевой» ĕçсене йĕлтĕрçĕсем, мотоциклистсем, охотниксем, йытă тата кăвакарчăн тытса усракансем активлăн хутшăннă. (ТАСС).

Уяв умĕнхи суту-илӳ

Чăвашторгăн Шупашкарти уйрăмĕ Май уявĕ умĕнхи суту-илĕве организацилеме хатĕрленет. Чебторгăн пур магазинĕсемпе ларекĕсенче те тутлă япаласем (печени, премĕк, т. ыт. те) 18 тĕслĕ пулмалла. Кунсăр пуçне 5 тонна сахăр, кондитер изделийĕсем 100 пин тенкĕлĕх, сĕт-çу продукчĕ 20 пин тенкĕлĕх, 20 пин тенкĕлĕх консерва, 130 пин тенкĕлĕх эрех-сăра, çăмарта, колбаса, чĕрĕ пулă, макарон изделийĕ тата ытти продуктсем те пулаççĕ. 20 тонна çăнăх-кĕрпе, 20 пин тенкĕлĕх пахча-çимĕç кăларма палăртнă.

Çие тăхăнмалли хатĕр платьесемпе атă-пушмак, тĕрлĕ трикотаж 230 пин тенкĕлĕх тата галантерея таварĕсем 100 пин тенкĕлĕх кӳрсе килсе сутмалла.

Уяв тĕлне квас, ситро тата морс сутмалли киосксем 9 уçăлаççĕ. Халĕ киосксене юсаççĕ. Квас-ситро сутмалли çĕрте кирлĕ инвентарьсене пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе çитернĕ тата киоскăсенче ĕçлеме çынсем те илнĕ. Анчах, Чебторг директорĕ Тойдеряков пĕлтернĕ тăрăх, квас-ситро сутас ĕçре Чăвашсоюз пысăк чăрмав кӳме пултарасси курăнать. Çак уйăхăн 15-мĕш тĕлне хула урамĕсенче чылай киосксем уçма шухăшланă, анчах Чăвашсоюз морс-ситро хатĕрлеме васкамасть-ха.

СУД

Складри вăрăсем

Çĕмĕрлери «Спотара» конторинче заведующи пулса ĕçлекен П. И. Кочетковпа таварсем илекен агент Г. А. Архипов государство укçи-тенкине сăратса пурăннă. Тĕрлĕ ултавлă хутсем туса Кочетков хăй кăсьине 6.702 т. 40 пус, Архипов 8.933 т. 45 пус чикнĕ. Çак ĕçре вĕсене Элĕк районĕнчи Какаç ялĕнчи Е. А. Ядринцев та нумай пулăшса пынă. Вăл хăйĕн тусĕсене ревизи тунă вăхăтра хăй патĕнче çак япаласене пур туса ултавлă распискăсем парса тăнă.

Кăçалхи февралĕн 22-мĕшĕнче çак ĕçе Çĕмĕрле районĕнчи 1-мĕш участокри халăх сучĕ пăхса тухнăччĕ. Халăх сучĕ çак вăрă-хурахсен ĕçне тĕрĕс хак парса склад заведующийĕ пулнă П. И. Кочеткова (государство пурлăхне саратнăшăн пĕр хутчен айăпланнăскере), агент-закупщик пулнă Г. А. Архипова иккĕшне те 10-шар çуллăха тĕрмене хупмалла, тĕрмерен тухсан 5 çул хушши суйлав прависĕр хăвармалла тата вĕсен пурлăхĕсене туртса илмелле турĕ. Е. А. Ядринцева, Кочетковпа Архиповăн тискер ĕçĕсене пĕлсе пытарса усранăшăн, 5 çул хушши тĕрмере хупса усрамалла, тĕрмерен тухсан 2 çул хушши суйлав прависĕр хăвармалла турĕ.

Айăпланакансем панă кассациллĕ жалобăна Чăваш АССР Верховный Сучĕн суд коллегийĕ пăхса тухса халăх сучĕн приговорне çирĕплетрĕ.

В. Бар.

Атăл çинче

Атăл шывĕ юлашки талăк хушшинче 7 сантиметр, мĕнпурĕ 29 сантиметр хăпарнă. Кĕркунне тулса юлнипе пĕрле 63 сантиметра çитет.

Йăнăш пулнă

«Чăваш Коммуни» хаçатăн февралĕн 25-мĕшĕнче тухнă номерĕнче, партархив çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Ярков юлташ член укçисене вăхăтра кассăна хывмасть, тесе çырнăччĕ.

ВКП(б) Шупашкар горкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, статьяра илсе кăтартнă фактсем тĕрĕс мар. Ярков юлташ член укçисене хăй аллинче тытса усрани пулман.

Пылхурчĕсене урăх вырăнсене куçарни

РСФСР Наркомземĕн пчеловодство Управленийĕ Тутар тата Башкир АСС Республикисенчен, Воронеж, Курск, Новосибирск облаçĕсенчен, Краснодар тата Орджоникидзе крайĕсенчен пылхурчĕсем ĕрчетес ĕç начар аталаннă районсене пылхурчĕсем куçарса каймалла хатĕрленсе çитет.

Май тата июнь уйăхĕсенче Мускав, Смоленск. Сталинград, Омск, Архангельск облаçĕсемпе Союзри ытти облаçсене 47400 çемье пылхурчĕ куçарса каяççĕ.

Кăçалхи çул РСФС Республикинчи колхозсенче çĕнĕрен 5.430 утар организацилеме палăртнă.

ПĔЛТЕРНИ

Паян, апрелĕн 10-мĕшĕнче, ВКП(б) 8 сехетре ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче хулари стена хаçачĕсен редакторĕсемпе редколлеги членĕсем валли Майăн 1-мĕш ячĕпе тухакан стена хаçат номерне мĕнле йĕркелесе кăлармалли çинчен калаçу пулса иртет.

Калаçăва «Большевистская печать» журналăн инструкторĕ Кузовлев юлташ ирттерет.

ВКП(б) Шупашкар горкомĕ, «Чăваш Коммуни» тата «Красная Чувашия» хаçатсен редакцийĕсем.

Лекци

Ыран, апрелĕн 11-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче экономикăллă образовани семинарне çӳрекен слушательсем валли **«Финансирование промышленности СССР»** темăпа лекци пулать. Лектор—**Михайлов** юлташ.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать. Итлеме пурте ирĕклĕнех кĕме пултараççĕ.

ПАРТКАБИНЕТ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

10 апреля в 8 часов вечера в 44 аудитории Чувашского с/х института

проводится лекция

профессора **Л. А. Пельцих** на тему: „Естествознание и сельское хозяйство".

Приглашаются преподаватели естествознания и химии и учителя начальных классов средних школ города.

Дирекция с/х института.
Гороно.

2—2

Балканри тата Африкăри вăрçă

(Апрелĕн 1-мĕшпе 8-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Апрель уйăхĕн пуçламĕшĕ çĕнĕрен виçĕ фронт — Германипе Югослави, Германипе Греци тата Италипе Югослави хушшинчи фронтсем уçăлнипе паллă пулчĕ. Империализмлă иккĕмĕш вăрçă орбитине Югославине — Балкан çурмаутравĕ çинчи пуринчен те пысăкрах государствăна çавăрса кĕртрĕç. Югослави территорийĕ 247.542 тăваткăл километр шутланать, унта 15.700 пин çын пурăнать. Унăн çĕр çинчи чиккисен тăршшĕ—2.282 километр, тинĕс çинчи чиккисен тăршшĕ — 700 километр ытла. Югославия — сăртлă çĕршыв, унăн территорийĕн пилĕк пайĕнчен виççĕ ытларах пайĕ тусемпе витĕнсе тăрать. Пуринчен пысăкрах тусем— çĕршывăн çурçĕр-хĕвеланăçпе кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕсенче, вĕсем унăн государство чиккисем тăрăх тăсăлса выртаççĕ. Италипе Югослави хушшинчи чикĕ Юлийски Альпăсен кăнтăр енчи хĕррисемпе иртсе пыраççĕ, унти чи çӳлĕ ту — Триглав тăвĕ (2.863 метр). Вĕсемпе çумлăнах Караванкен тăвĕ вырнаçса тăрать, вăл Драва юханшывĕ патне çити Югославипе Германи чикки пулса тăрать. Югославипе Венгри чикки тата Югославипе Румыни чикки пĕр пайĕ, Дунай юханшывĕ патне çити, [illegible] тăсăлса выртать. Анчах та шывлă пысăк чăрмавсем. чикĕпе юнашар пекех юхса выртакан Дунайпа Сава юханшывĕсем пурри çав чиккĕне хӳтлеме чылаях пулăшать. Балкан тăвĕн кăнтăр енчи хĕррисем Югославине Болгарирен уйăрса тăраççĕ. Унăн тӳписенчен хăшĕ-пĕрисем 2.300 метр çӳлĕшне çитеççĕ. Тусем хушшипе иртсе тухмалли вырăнсем нумай мар, вĕсене чикĕн икĕ енĕнчен те çăмăллăнах пӳлсе лартма пулать. Югославин кăнтăр енчи чиккисене те хӳтлеме лайăх, мĕншĕн тесен вĕсем пуринчен ытларах тусем тăрăх иртсе пыраççĕ. Вăрçă ĕçĕсем пуринчен ытларах юханшывсен айлăмĕсем тăрăх сарăлса пыма пултараççĕ, анчах та вĕсенчен нумайĕшĕ ытлашши ансăр тата кукăр-макăр. Çулйĕрсем час-часах тоннельсем витĕр иртсе пыраççĕ, вĕсене çĕмĕрсе тăксан войскăсем малалла кайма пултараймаççĕ. Югослави çарĕ—Балкан çурмаутравĕ çинчи çĕршывсен çарĕсенчен чи пысăк йышлă тата малта пыракан çар пулса тăрать. Мирлĕ вăхăтра унăн составĕнче пехота дивизийĕсем 16, кавалери дивизийĕсем 3 пулнă. Çак дивизисенчен 6 çар пулса тăнă. Югослави çарĕнче корпуссем çук. Çара çапăçма вĕрентсе хатĕрленĕ çĕрте тусем çинчи ĕçсем çине пысăк тимлĕхпе пăхнă. Ютçĕршывсенчи хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, вăрçă вăхăтĕнче Югослави çарне 2 миллион çынна çити ӳстерме пулать. Çав хаçатсемех пĕлтернĕ тăрăх, Югославин пĕр пине яхăн самолет пур, вĕсенчен нумайĕшне ютçĕршывсенче тунă.

Болгарипе Греци чиккинче те Германи хĕçпăшаллă вăйĕсен вăрçă ĕçĕсем пуçланнă. Çак чикĕ пĕтĕмĕшпе пекех Родоп тăвĕн хĕррисемпе иртсе пырать. Кунти тусем 2 пин метра çити çĕкленсе тăраççĕ. Вĕсем урлă каçса тухма лайăх пĕртен-пĕр вырăнсем— Струма, Места тата Марица юханшывĕсен айлăмĕсем пулса тăраççĕ (Марица Греципе Турци чикки тăрăх юхса выртать). 1939 çултан пуçласа, Греци командованийĕ хăйĕн çурçĕр чиккинче, уйрăмах çӳлте асăннă юханшывсен айлăмĕсенче оборона строительствине вăйлăн сарса янă. Çак укрепленисене «Метаксас линийĕ» тесе ят панă. Греци войскисене тактика енĕпе лайăх вĕрентсе хатĕрлени, вĕсене Англи вооруженийĕпе, пуринчен малтан танксемпе авиаципе хирĕç кĕрешмелли артиллерипе çителĕклĕ хĕçпăшаллантарни, вĕсене хăйсен çурçĕр енчи чиккисене вăйлăн хӳтлес ĕçе организацилеме май парать.

* * *

Абиссинире, Англи войскисем Аддис-Абебăна туртса илнĕ хыççăн, вăрçă ĕçĕсем вĕçнелле çывхарса пыраççĕ. Эритрея çинчен те çакнах калама пулать. Массауана — Италин юлашки опорлă пунктне — итальянецсен пурпĕрех памалла пулать. Вăрçă ĕçĕсенче улшăну туса хунă тапхăр — Эритрейăра Керена, Абиссинире Диредауана англичансем туртса илнĕ тапхăр пулнă. Ливирен чылаях пысăк вăйсем куçарса пырса тата пур йышши войскăсене те противник войскисенчен ытларах вăйлатса, Англи командованийĕ Италин хирĕç тăмалли вăйне çапса хуçнă. Ку ĕçре Англи авиацийĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă. Керен йĕритавра туса çавăрăннă укрепленисем çине татти-сыпписĕр 4 кун хушши бомбăсем пыра-пыра пăрахнă. Икĕ уйăх хушши çине тăрса кĕрешнĕ хыççăн, Итали чаçĕсем питĕ вăйсăрланса юлнă пулас, каялла чакса пынă чух вĕсем англичансене хирĕç çапăçманпа пĕрех. Вĕсем çулсемпе кĕперсене кăна çĕмĕрсе хăварнă, анчах та çапла туни наступлени туса пыракан англичансене чарса тăма пултарайман. Асмарăпа Аддис-Абебăна пĕр çапăçмасăрах англичансене панă.

* * *

Юлашки вăхăтра Германипе Итали командованийĕ Триполитание мотомеханизированнăй пысăк вăйсем илсе пыма ĕлкĕрнĕ. Чылаях вăрăм вăхăт хушши разведкăллă ĕçсем туса пынă хыççăн, Германипе Италин мотомеханизированнăй тата бронетанковăй чаçĕсем наступлени тума пуçланă, апрелĕн 4-мĕшĕнче Бенгазипе Киренаикăри тĕп хулана туртса илнĕ. Çак хула икĕ уйăх хушши англичансен аллинче пулнă.

Англи командованийĕ чылай вăйсене Эритрейăпа Грецине куçарса кайса, çак фронта вăйсăрлатнă, çакна пула унăн Бенгазине çапăçусăрах памалла пулса тăнă. Абиссинири тата Эритрейăри вăрçă ĕçĕсем пĕтсе килнĕ май, англичансем хăйсен войскисене каллех Киренаикăна куçарса пыма, Германипе Итали пуçланă наступленине чарса лартма пултараççĕ. Англи тинĕс-çар флочĕ çак маневра пурнăçа кĕртме пултарать, вăл Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнче, халиччен пекех, пуçпулса тăрать.

Майор **Е. СОСНИН.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85. издательство конторин—0—23.

НТ 2829. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 227, ф. 6, 58 x 84 п. л.